Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АПРЕЛ 21 КĔҪНЕРНИКУН 91 (4904)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш ҫул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕҫтăвкомăн хаҫачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

1938 ҫулхи бӳджет

Ленин—Сталин партийĕ, Сталин йулташ йертсе пынипе нацилĕ республикăсен хуҫалăхĕ, культури пĕрмайăх ӳссе пырать. Чăваш республикĕ хуҫалăх, политика, культура тĕлĕшĕнчен пысăк хăвăртлăхсемпе ӳссе тăрекленсе пыни вăл —ленинла-сталинла наци политикине пурнăҫа тĕрĕс кĕртнин результачĕ пулать. Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви пирĕн республикăна малашне тата хăвăрт аталантарасшăн, ӳстересшĕн тăрăшни Тĕпĕҫтăвкомăн Х-мĕш Ҫессийĕ ҫирĕплетнĕ республикăн 1938 ҫулхи бӳджетĕнче питĕ те уҫҫăн курăнса тăрать. Республикăн халăх хуҫалăхĕ пысăк хăвăртлăхсемпе ӳснине, ĕҫҫыннисен пурнăҫĕ лайăхланса пынине, ҫынсăн Сталинла тăрăшнине бӳджет йар уҫҫăн кăтартса парать.

Тĕпĕҫтăвкомăн Х-мĕш Ҫессийĕ республикăн 1938 ҫулхи бӳджетне пĕтĕмпе 129.819,9 пин тенкĕ ҫирĕплетрĕ. Кунашкал пысăк бӳджета республикă хăйĕн историйĕнче курман. 1937 ҫултипе танлаштарсан республикăн кăҫалхи бӳджечĕн ӳсĕмĕ 12 процент пулать. Малтанхи ҫулсенче республикă бӳджечĕ пурĕ те 3 мĕлйун тенкĕлĕх ҫеҫ пулнине асă илсен, епĕр мĕн пек малала кайни пуриншĕн те паллă. Мĕнчухлĕ малала кайнă, мĕнчухлĕ ӳснĕ епĕр!

Бӳджетăн доход пайне тултарас ĕҫре хуҫалăхăн хăш пайĕсем тĕп вырăнта тăраҫҫĕ-ха? Республикă промышленнăҫĕ вăйланнă май, промышленнăҫ паракан доход та ӳссех пырать. Ҫапла, 1937 ҫулти бӳджетра промышленнăҫ 1.423,0 пин тенкĕ доход панă пулсан, кăҫал 2.549,0 пин тенкĕ парать, ку вăл 79,1 процент ӳсĕм пулнине пĕлтерет. Кăҫал йалхуҫалăхĕнчен 91 мĕлйун тенкĕ, вăрман хуҫалăхĕнчен 5.783,0 пин тенкĕ, коммунальнăй хуҫалăхран 1.430,8 пин тенкĕ, суту-илӳрен 326,0 пин тенкĕ, вырăнти налогсенчен 1.324,2 пин тенкĕ доход илме пăхнă. Капиталисăмла ҫĕршывсенче, уйрăмăнах фашиссем пуҫ пулса тăракан ҫĕршывсенче, бӳджетăн доход пайĕнче ĕҫҫыннисенчен шăйăрса илекен налогсем тĕп вырăнта тăраҫҫĕ пулсан, пирĕн ҫĕршывра йалтах урăхла. Социалисăмла тăван ҫĕршывăн пуянлăхĕ ӳснĕ май бӳджетăн тупăш пайĕнче налогмар, промышленнăҫ, йалхуҫалăхĕ, суту-илӳ, коммунальнăй хуҫалăх, вăрман хуҫалăхĕ паракан доходсем тĕп вырăнта тăраҫҫĕ. Ҫаксем вĕсем ĕҫҫыннисен пурнăҫне малала тата ытларах лайăхлатма, культурине ҫĕклеме пысăккăн пулăшаҫҫĕ.

Бӳджетри 129.819,9 пин тенкĕ укҫана епĕр мĕн тăватпăр? Промышленнăҫ строительствине 5.149,0 пин тенкĕ, йалхуҫалăхне вăйлатма 4.290,0 пин тенкĕ, коммуналлă ҫуртйĕр-хуҫалăх строительствине 5.335,9 пин тенкĕ, суту-илӳ ĕҫне лайăхлатма 557,1 пин тенкĕ, транспорт ĕҫне 1.534,0 пин тенкĕ, сыхăну ĕҫне 420 пин тенкĕ расхутлатпăр.

Партипе правительствă халăхăн социаллă-культурăлă ыйтăвĕсемпĕн хытă тăрăшаҫҫĕ. Ҫавăнпа та пирĕн республикăн бӳджечĕн 4 пайĕнчен виҫĕ пайĕ ҫак ĕҫсене тума кайать. 1938 ҫулти бӳджет тăрăх, халăха вĕрентес ĕҫе 68.133,5 пин тенкĕ, сывлăха сыхлас ĕҫе 21.663,0 пин тенкĕ, социаллă пулăшу ĕҫне 5.531,0 пин, физкультурă ĕҫне 200,0 пин тенкĕ кайать. Халăха вĕрентес ĕҫре епĕр кашни ҫын пуҫне 68 тенкĕ ытларах расхутлани питĕ пысăк ĕҫ ҫинчен калать. Ку вăл кăҫал шкулсен, тĕрлĕ культурлă учреждевисен ĕҫĕсене, кадрсем хатĕрлес ĕҫе лайăхлатас ĕҫрте тĕп вырăнта тăрать. Халăх сывлăхне сыхлама расхутлакан укҫа иртнĕ ҫулхинчен 30 процента йахăн ӳсет. Халăхшăн, унăн пурнăҫĕшĕн, унăн культуришĕн ҫакăн пек тăрăшакан государствă тĕнчере Совет Союзĕсĕр пуҫне урăх ҫук. Совет Союзĕнче ҫеҫ, Сталинла саманара пурăнакан халăхсем ҫеҫ савăнăҫлă та телейлĕ пурнăҫпа пурăнма пултараҫҫĕ.

Планпа пăхнă ĕҫсене вăхăтра тăвас тесен, пирĕн бӳджета доход тата расход йĕнĕпе те тĕрĕс тултарса пымала. Финанс дисциплинине ҫирĕп тытмала, пур ĕҫре те ҫирĕп контроль, ответлăх пулмала. Ҫапла ĕҫлесе 1938 ҫулта тума палăртнă пысăк ĕҫсене вăхăтра укҫа-парса тăмала.

Финанс оргăнне хĕсĕнсе кĕнĕ халăх тăшманĕсем: троцкиссемпе бухаринцăсем, буржуалă националиссем бӳджета, финанс дисциплинине пăсма, укҫа-тенкĕне саратса пĕтерме тăрăшнă. Вĕсем партипе совет влаҫĕн финанс политикине, налог политикине пăсса пĕтерсе халăха сиенлĕ ĕҫсем тунă. Пирĕн ҫакăнтан хамăрăн 1938 ҫулхи ĕҫсем валли политикăла вывăдсем тумала. Сăтăрҫăсем финанс фронтĕнче туса хăварнă сăтăрла ĕҫсен йуланкисене хăвăрт пĕтермелле. Финанс ĕҫĕнче, бӳджет ĕҫĕнче чăн-чăн большевикла йĕркелĕх кӳмеле. Унсăрăн епĕр республикă бӳджетне доход тата расхут йĕнĕсемпе тултарса пыма пултараймастпăр.

Финанс оргăнĕсен—Финанс Халăх Комиссариачĕ, районри финанс пайĕсем, банкăсем тăрăшса ĕҫлени уйрăмăнах пысăк вырăнта тăрать. Вĕсен, хăйсене панă правапа усă курса, хуҫалăх, кооператив оргăнĕсене финанс хуҫалăхне лайăх ĕҫлеттерекен тумала. Вĕсен—предприйатисене, суту-илӳ организацисене, хуҫалăх организацисене, районĕҫтăвкомсемпе йалсоветсене, колхозсене финанс хуҫалăхне лайăх организацилеме пулăшмала. Ҫакă вăл бӳджета пур йĕнчен те ҫирĕп пурнăҫа кĕртсе пымалли тĕп условисенчен пĕри пулать. Растратăна—социалисăмла пурлăха ҫаратассине, хуҫасăрлăха, усăсăр расхутсене, сметăсăр расхутсене кăҫал йалтах пĕтермелле.

1938 ҫулти бӳджета тултармалли тăкăлă условисенчен пĕри—кадрсене пĕлсе ĕҫе илни, вĕсене большевикла воспитани парасси пулать. Пирĕн финанс, хуҫалăх аппаратĕсенчен сăтăрҫăсене, жуликсене, вăрăсене тимĕр шăпăрпа шăлса тасатмала. Партипе совет влаҫĕ ĕҫĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕҫлекен шанчăклă ҫынсене ĕҫе лартмала, вĕсене вĕрентсе пымала.

Епĕр 1938 ҫулта промышленнăҫра, йалхуҫалăхĕнче, культурă строительствинче питĕ пысăк ĕҫсем тума палăртнă. Ҫак пысăк ĕҫсене тума укҫа-тенкĕ нумай кирлĕ. Ҫавăнпа та пирĕн укҫа-тенкĕ нумайрах мобилизацилемеле, финанс хуҫалăхне ҫирĕп йĕркелемеле, бӳджета пурнăҫа тĕрĕс кĕртсе пымала. Пур ĕҫре те пысăк организацилĕх, дисциплинă, учот, контроль, йĕрке пулмала.

Вырăнти бӳджет Чăваш республикин халăх хуҫалăх планĕн тĕп пайĕ пулса тăрать. 129 мĕлйунлă бӳджет халăх хуҫалăхне вăйлатма, ĕҫхалăхĕн пурнăҫне лайăхлатма, культурăна ӳстерме кайать. Ҫак бӳджета—халăх бӳджетне пурнăҫа ҫирĕппĕн кĕртсе пырассишĕн кĕрешесси пуриншĕн те хисеплĕ ĕҫ пулать.

1938 ҫулхи Майăн 1-мĕшне иртермелли ЛОЗУНГСЕМ

1. Сывă пултăр Майăн 1-мĕшĕ—пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн революцилĕ паттăр вăйĕсен смотăрĕ!

2. Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр! Маркспа—Енгельсăн—Ленинăн интернационаллă йалавĕ айне тăрăр!

3. Класла тăвансене, капитал тĕрмисенче ларакансене, йунлă фашисăм террорĕн тискерлĕхĕнче асапланакансене, рабочи клас ĕҫĕ ҫĕнтерессишĕн кĕрешекенсене Майăн 1-мĕш кунĕнче пирĕнтен пролетарилĕ салам!

4. Фашисăм—вăл капиталиҫсемпе помещиксен рабочисемпе хресченсене тата ĕҫ интеллигенцине хирĕҫле террорлă политики. Фашисăм—вăл йут ҫĕрсене туртса илессишĕн пыракан вăрҫă. Фашисăм—тĕнчери халăхсем хушшинчи туслăхăн чи хайар тăшманĕ. Фашисăма хирĕҫ кĕрешме вăйсене мобилизацилер!

5. Мĕн пур ҫĕршывсенчи рабочисем, работницăсем, хресченсем тата ĕҫҫыннисем! Фашисăма тата вăрҫа хирĕҫ халăх фронтне апалатса тата ҫирĕплетсе пырăр! Миршĕн, демократилĕ ирĕклĕхсемшĕн, социалисăмшăн!

6. Испани халăхĕ шалти тата йут ҫĕршывсенчи фашисăма хирĕҫ кĕрешни—мĕн пур малта пыракан тата малала туртăнакан етемлĕхĕн ĕҫĕ. Никама пăхăнмасăр тата ирĕклĕ пурăнассишĕн паттăр кĕрешекен Испани халăхне салам!

7. Никама пăхăнмасăр пурăнассишĕн Йапони захватчикĕсене хирĕҫ тата ытти захватчиксене хирĕҫ кĕрешекен аслă Китай халăхне тăванлă салам!

8. „Епĕр миршĕн тăратпăр, епĕр мир ĕҫĕшĕн ĕҫлетпĕр. Анчах епĕр пире йунанинчен хăрамастпăр, вăрҫă чĕртсе йаракансен тапăна вĕ ҫине тапăнупах ответ пама хатĕр тăратпăр" (Сталин).

9. Сывă пултăр пирĕн тăван, никам ҫĕнеймин Хĕрлĕ Ҫар, ССР Союзĕнчи халăхсен мирлĕ ĕҫĕн хăватлă хӳтлехĕ, Октябрьти Социалисăмла Аслă революци ҫĕнтерсе илнисен шанчăклă хуралҫи!

10. Тăван ҫĕршыва сыхласси—ССР Союзĕн кашни гражданинĕн чи таса тивĕҫĕ!

11. Хĕрлĕ Ҫарăн ҫамрăк бойецĕсене, Совет влаҫĕшĕн тĕрĕс тăма, хамăрăн социалисăмла аслă тăван ҫĕршывшăн тĕрĕс тăма Майăн 1-мĕшĕнче присăга паракансене, хĕрӳлĕ салам!

12. Сывă пултăр ССР Союзĕн Тинĕс Ҫар Флочĕ—хамăрăн тăван ҫĕршывăн тинĕс чиккисен шанчăклă хуралҫи!

13. Сывă пулччăр Пĕтĕм тĕнчипе авиаци рекорчĕсене тунă совет летчикĕсем пирĕн тăван ҫĕршывăн мухтавлă сокалĕсем!

14. Пограничник бойецсене, социалисăмлă ҫĕршывăн ҫивĕч куҫлă часовойĕсене салам!

15. Пирĕн тăван, хăватлă Хĕрлĕ Ҫар, Тинĕс Ҫар Флочĕ тата Хĕрлĕ авиаци ӳссе тĕреклене, техникăна алла илсе тата пиҫĕхсе ҫирĕпленсе пыччĕр!

16. ССР Союзĕнчи рабочи клас капиталисăмла ҫĕршывсенчи рабочи класпа интернационаллă ҫыхăну тытассине вăйлатса тата ҫирĕплетсе пырар! Пĕтĕм тĕнчери пролетарисен пĕрлĕх йалавне ҫӳлерех ҫĕклер!

17. Сывă пултăр рабочисемпе хресченсен союзĕ—Совет влаҫĕн никĕсĕ!

18. Патша Российĕ халăхсен тĕрмийĕ пулнă. Совет ҫĕршывĕнче пĕртан правалă халăхсен аслă союзĕ ӳссе тата ҫирĕпленсе пырать. Сывă пултăр ССР Союзĕнчи халăхсен тăванлă союзĕ тата аслă туслăхĕ!

19. Совет халăхĕ большевиксен партийĕ йертсе пынипе хамăр ҫĕршыв ирĕклĕхне тата никама пăхăнманлăхне кĕрешсе илчĕ,—сывă пултăр Совет халăхĕн моральлĕ тата политикăлă пĕрлĕхĕ!

20. Сталинла Конституци—Октябрьти Социалисăмла Аслă Революцин кĕрешӳпе ҫĕнтерӳсен итогĕ. Сывă пултăр ҫĕнтернĕ социалисăмăн тата чăн-чăн демократисăмăн Конституцийĕ!

21. Халăх хуҫалăхĕн пур отраҫĕлĕсенче те йут ҫĕршыв разведкисене тара кĕрешнĕ сыхтăмла-троцкисла сăтăрҫăсен сиенĕсене пĕтĕмпех пĕтерер! ССР Союзне социалисăмăн никам тĕкĕнейми крепăҫĕ туса хурар!

22. Промышленнăҫпа транспортри ударниксемпе ударницăсен нумай мĕлйунлă ҫарне, стахановецсемпе стахановкăсене—пирĕн ҫĕршывăн йатлă ҫыннисене—большевикла салам!

23. Хуҫалăхăн 1938 ҫулти—виҫҫĕмĕш пилĕкҫуллăхăн пĕрремĕш ҫулĕнчи—планне тултарар тата иртерсе тултарар! Хăватлă стахановла йухăма анлăнрах сарса йарар!

24. Йавăр индустрири тата машиностройенири рабочисемпе работницăсем, инженерсем тата техниксем! Кăмрăк, нефть, металл нумай кăларассишĕн, ҫĕршыв халăх хуҫалăхĕн аталанăвĕн никĕсĕ пулса тăракан чи лайăх машинăсене вăхăтра туса кăларассишĕн!

25. Оборона промышленнăҫĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсем тата техниксем! Хамăрăн тăван ҫĕршывăн оборона хăватне тĕреклетĕр! Тăван Хĕрлĕ Ҫара чи ҫĕнĕ техникăпа хĕҫпăшаллантарăр!

26. Ҫăмăл промышленнăҫри рабочисемпе работницăсем, командирсем, тата инженерсем! Совет граждăнĕсене ситца, пурҫăн, сукна, трикотаж, урана тăхăнмалисем ытларах парăр! Продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн кĕрешĕр!

27. Уй-хир ĕҫĕнчи стахановецсене ҫураки планне большевикла тултарса пыракансене—салам!

28. Колхозниксемпе колхозницăсем, агрономсем тата совхозсенчи работниксем! Ҫуракине кăтартула иртерессишĕн, пайлă тырпулшăн кĕрешĕр! Сывă пултăр колхозсемпе колхозниксен пуйан та культурала пурнăҫĕ!

29. Рабочи класăн культурăла-техникăлă виҫине инженерла техникăла ĕҫри работниксен виҫи таран хăпартар!

30. Ҫурҫĕр польӳспе ҫĕнсе илнĕ паттăр геройсене папанинецсене, социалисăмла тăван ҫĕршывăн тивĕҫлĕ ывăлĕсене хĕрӳлĕ салам!

31. ССР Союзĕнчи халăхсен культури малала чечекленсе ӳссе пырассишĕн, совет ăсчахĕсене техникин ҫĕнĕ йĕнĕҫлăхĕсемпе ҫĕнтеревĕсемшĕн!

32. Сывă пултăр ССР Союзĕнчи пĕртан правалă, государствăна тытса тăрас ĕҫе тата ҫĕршывăн хуҫалăхпа культурлă ĕҫĕсене активлăн хутшăнакан хĕрарăм!

33. Пионерсемпе пионеркăсем! Совет шкулĕнче вĕренекенсем! Пĕлӳсене ҫĕнсе илĕр, Ленин—Сталин ĕҫĕшĕн кĕрешекенсем пулма вĕренĕр!

34. Совет ҫĕршывĕн мухтавлă физкультурникĕсемпе—физкультурницăсене—Майăн 1-мĕшĕ йачĕпе салам!

35. Сывă пултăр комсомол большевикла партин хăватлă резервĕ тата шанчăклă помощникĕ! Сывă пулччăр пирĕн тăван ҫĕршыври ĕҫçамрăкĕсем!

36. Хамăрăн ҫитменлĕхсене хирĕҫ критикăпа самокритикăна анлăнрах сарăр! Рабочисемпе хресченсен социалисăмла государствин хăватне тĕреклетĕр!

37. „Массăсемпе ҫыхăнса тăни, ҫав ҫыхăнăва ҫирĕплетсе пыни, массăсен сассине итлеме хатĕр пулни—ака мĕнре большевикла йертсе пырассин вăйĕпе ҫĕнтерейми хăвачĕ" (Сталин).

38. Революцилĕ сыхăлăха вăйлатăр! Хамăр хушăри политикăлă тимсĕрлĕхе пĕтерĕр!

39. Халăхăн тăшманĕсене—троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла шпионсемпе сăтăрҫăсене, йут ҫĕршывсен разведкисене тара кĕрешнĕскерсене тĕп тăвăр! Тăван ҫĕршыва ирăхĕҫ тăшмана сутăнакансене вилĕм!

40. Пур тĕрлĕ двурушниксене пурне те тăра шыв ҫине кăларăр! Пирĕн партийĕ большевисăмăн никам илейми крепăҫĕ туса хурар!

41. Рабочисемпе хресченсем! Суйлав кампанине сарса пырăр! Пĕрле пулса союзлă тата автономлă советлă социалисăмла республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйлама чи лайăх, Ленин—Сталин ĕҫне вĕсне ҫити паранна ҫынсене палăртăр!

42. ССР Союзĕнчи ĕҫҫыннисем! Союзлă тата автономлă советлă социалисăмлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене хамăрăн тăван ҫĕршывăн паттăр патриочĕсене, рабочисемпе хресченсен телейĕшĕн, социалисăмшăн ним пăрăнмасăр кĕрешекенсене суйлăр!

43. Коммуниссем! Партире тămал массăсемпе ҫирĕпрех ҫыхăнăр! Суйлав кампанинче чи кирли—партире тăман массăсенчен уйăралмасăр, партире тăманнисемпе пĕрле ĕҫлемеле, вĕсемпе пĕрле союзлă тата автономлă советлă социалисăмлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене кандидатсем палăртмала!

44. Сывă пултăр коммуниссемпе партире тăманнисĕн союзлă тата автономлă советлă социалисăмлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен пулас суйлавĕсенчи блокĕ!

45. Сывă пултăр та ҫирĕпленсе пытăр пирĕн хăватлă тăван ҫĕршыв—Советлă Социалисăмлă Республикăсен Союзĕ!

46. Сывă пултăр Пĕтĕм Союзри Коммуниссен большевиксен партийĕ—ССР Союзĕнчи ĕҫҫыннисен малти отрйачĕ!

47. Сывă пултăр Коммунисла Интернационал—вăрҫа хирĕҫ, фашисăма тата капиталисăма хирĕҫ кĕрешĕвĕн организаторĕ! Сывă пултăр коммунисăм!

48. Сывă пултăр Маркспа—Енгельсăн—Ленинăн никам ҫĕнейми аслă йалавĕ! Сывă пултăр ленинисăм!

Пĕтĕм Союзри Коммуниссен (большевиксен) Партин Тĕп Комитечĕ.

Йулашки хыпарсем

Хесус Ернандес—Испани республикĕн ҫарĕсен политикăлă комиссарĕ

МАДРИД, апрелĕн 19-ш. (ТАСС). Испани республикĕн малтан ҫутĕҫ министрĕ пулнă Хесус Ернандес коммуниса Испани республикĕн Миаха генерал йертсе пыракан пĕтĕм ҫарĕсен политикăла комиссарĕ тунă.

Йапони салтакĕсем Китайа кайассинчен пăрăнаҫҫĕ

ХАНЬКОУ, апрелĕн 18-ш. (ТАСС). Вырăнтан илнĕ хыпарсем тăрăх, март уйăхĕн вĕҫĕнче Осака гарнизонĕнче Йапони салтакĕсем Ҫурҫĕр Китайа кайассинчен пăрăнни массăлăн пулса иртнĕ.

Германипе Итали Йапонине ҫар йĕнчен вăйлăн пулăшаҫҫĕ

ХАНЬКОУ, апрелĕн 18-ш. (ТАСС). Йулашки вăхăтра Германипе Итали йĕнчен Йапонине ҫарсем тата вăрҫă хатĕрĕсем йарса пулăшасси вăйланни палăрать. Таньцзине Итали самолечĕсем 13 ҫитнĕ, Шанхайа—Германи самолечĕсем пурĕ 120 тата Германин 276 техникĕ ҫитнĕ. Вĕсем хушшинче—30 химик. Шанхайра Йапонин авиаци курсĕсенче Германипе Итали инструкторĕсем Йапони летчикĕсене вĕрентеҫҫĕ.

Йапонĕцсен тискерлĕхĕ

ЛОНДОН. „Ньйус кроникл" хаҫатăн Гонконгри корреспонденчĕ ҫапла пĕлтерет: апрелĕн 17-мĕшĕнче Йапонин 50 самолечĕ Кантон хулин ҫурҫĕр пайĕ ҫине—халăхсем йышлăн пурăнакан вырăн ҫине—бомбăсем пăрахнă. 150 ҫын ытла вилнĕ. 5 шкул ҫуртне ишĕлтерсе антарнă.

Бомба ӳксе ҫурăлса кайнипе Кантонпа Гонконг хушшинчи чукунҫул кĕперĕ пысăккăн сийенленнĕ. Чукунҫул тăрăх пуйăссене ҫӳреме чарнă, пуйăссем тепĕр темиҫе кунран ҫӳреме пуҫлаҫҫĕ.

(ТАСС).

1938 ҪУЛХИ ҪУРАКИ

Йетĕрне районĕнчи колхозсем акана тухрĕҫ

ЙЕТĔРНЕ. Апрелĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз ҫуракине тухрĕ. Ку вăхăтчен пурĕ 28 гектар сухаласа виккă акнă. Польанкăри Кирăв йачĕпе тăракан колхоз та 8 гектар ҫинче виккă утăлăх, 8 гектар ҫинче силослăх акса хăварнă. Ҫак асăннă колхозра 50 гектар ҫинчи клевĕре, 30 гектар ҫинчи кĕр калчисене апат панă. Хĕл вăхăтĕнче хатĕрленĕ 5.800 лав тислĕке сухалама салатса пăрахнă.

Анат Ачакри „Ҫĕнĕ пурнăҫ" колхозра 33 гектар кĕр калчине апат панă. Халь кунта вăрлăхсене йаровизацилеҫҫĕ.

Апрелĕн 20-мĕшĕнче Мăн Шемертенри „Ленин хушувĕ", Кĕҫĕн Шемертенри „Ҫĕнĕ звено", Кăкшăмри Илйич йачĕпе тăракан колхозсем суха тума тухаҫҫĕ.

Н. Цветков.

Калчасене апат панă

Булатăвăри (Вăрнар р.) Молотăв йачĕпе тăракан колхозра, апрелĕн 14-мĕшĕнче кĕрхи калчасене апат пама тытăнчĕҫ. Малтанхи кун А. Михейĕв йертсе пыракан бригадăра 8,62 гектар кĕрхи тулă, 8,38 гектар ыраш калчине апат панă. Колхозĕпе пурĕ 260 гектар кĕрхи калчана апат панă.

Ст. Улангай.

Смоленскри сăнав станци ҫумĕнче колхоз лабораторисен заведуйушчисене валли курс организацилене.
ӲКЕРЧĔК ҪИНЧЕ: Курсантсем практикăла вĕренӳре.
Йарославцĕв фото-ӳкерчĕкĕ (Союзфото).

Пахчасенче ҫурхи ĕҫсем пуҫланчĕҫ

ТАВАЙ. Пур ҫĕрте те ҫурхи ĕҫсем хĕрӳлĕн пуҫланчĕҫ. Пахча-ҫимĕҫ бригадисенче тахҫанах ĕҫе тытăннă. Мучарти „Октябрĕн 25-мĕшĕ" колхозри колхозницăсем колхоз пахчине иртнĕ ҫулхи ҫӳп-ҫапсенчен тасатрĕҫ.

Районри чылай колхозсенче пахча-ҫимĕҫ бригадисем пур. „Звезда" колхозри пахча-ҫимĕҫ ĕҫĕпе ĕҫлекен Ваҫилйĕв мартăн 10-мĕшĕнчех 10 рамă сухан лартнă. Халь сухане парка шăтса тухнă. Ваҫилйĕв йулташ майăн 1-мĕшне сутма симĕс сухăн ӳстерсе хатĕрлет. Ҫак колхозрах 5 рамă хăйар лартнă.

Киччери „Майăн 1-мĕшĕ" колхоз иртнĕ ҫулта пахча ҫимĕҫсем нумай туса илнĕ. Вăл пысăк тупăш панă. Кăҫал ку колхозра 2 гектар ҫине ир пулакан тĕрлĕ пахча-ҫимĕҫсем лартса ӳстереҫҫĕ. 5 парникре помидор тата 5 парникре купăста калчи ӳстерме лартнă. Ку колхозра пахча-ҫимĕҫ бригади 17 ҫынтан тăрать.

Т. Майорăв.

Хĕрӳлĕ ĕҫ пуҫланчĕ

ПАТĂРЙЕЛ, (телефонпа). Ҫĕнĕ Ахпӳртри Сталин йачĕпе тăракан колхоз апрелĕн 16-мĕшĕнче 30 гектар ҫине утă тума викă акнă. Пĕрчĕлĕ тырăсене акма 51 гектар сухаланă.

Острйаков орденоносĕц йертсе пыракан „Хĕрлĕ Туҫа" колхозра кĕр сухи тунă вырăна 285 гектар сӳреленĕ.

Анат Туҫари „Ҫăлтăр" колхозра утăлăх викă акнă. Халь кĕр сухи тунă вырăна сӳрелеҫҫĕ. Колхоз 79,6 гектар ҫине клевĕр акса плана иртерсе тултарчĕ.

Колхозсен уйĕнче калчасем йур айĕнчен лайăх тухнă.

Н. Пушкин.

Клевĕр акас плана 70 процент тултарнă

ВĂРМАР, (телефонпа). Апрелĕн 19-мĕшне Вăрмар районĕ клевĕр акас плана 70 процент тултарнă. Чылай колхозсем тĕштырă вăрлăхĕсене йаровизацилеҫҫĕ. Акă, „Хĕрлĕ Кĕтнĕ" колхоз 4 гектар ҫинче акмалăх вăрлăхсене йаровизацилеме хунă. Ҫак колхозра кăҫал пĕтĕмпех йаровизациленĕ вăрлăхпа акса хăвараҫҫĕ. 23 гектар ҫинчи кĕрхи калчасене апат панă. „Ленин ҫулĕ" колхозра та 5 гектар кĕрхи калчасене апат панă.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Политикăлă агитацине кулленхи ĕçпе çыхăнтармала

Мăн Мамăшри пуçламĕш парторганизаци çумĕнче агитколлектив пур. Кунти агитатăрсем ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлавĕ вăхăтĕнче хастарлăн ĕçлесе, хăйсен пултарулăхне кăтартнă. Вĕсем Мăн Мамăш, Аначкасси, Пранька, Тимой Мамăш, Хура Çырма йалĕсенчи халăх хушшинче политикăла агитацине лайăх организацилесе пынă, Верховнăй Совет суйлавне пĕтĕм халăха йавăçтарнă хисепне тивĕçлĕ ĕç тунă.

Ун чухне тунă çитенÿсемпе лăпланса лармасăр, ĕçе татах малала йарса, аталантарса пымала пулнă. Анчах агитколлектив ĕçе йăвашланнă, нумай агитатăрсем суйлав иртнĕренпе ĕçе пĕртте хутшăнман.

— Йал халăхĕ тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсемпе, хамăрăн Совет Сойузĕнчи ĕçсемпе интересленет. Епĕр ку ыйтусем тăрăх сайра хутра докладсем тунă, анчах, паллах ĕнтĕ, вăл çителĕксĕр. Халăха куллен-кун ăнлантарса, вĕрентсе пымала. Çакна пурнăçламашкăн пирĕн вăй çитет. Йалти агитатăрсем ĕçлеме пултараççĕ, ĕçе йĕркелесе йани кăна кирлĕ,— тет агитатăр Çутруков йулташ.

Агитатăрсен ĕçĕ çапла йăвашланни вĕсенчен нумайĕшĕ йулашки вăхăтра агитаци ĕçĕнчен йăлтах уйăрласа кайни парторганизаци начар ĕçленинчен килнĕ.

Агитколлективăн ĕç планĕ пулман агитатăрсене пуçтарса канашлусем иртермеççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ 22 агитатăртан хальхи вăхăтра Çутруков, Григорьев, Г. Çмирнов, В. Сорокин Г. Толстов йулташсем çеç ĕçлеççĕ.

Политикăла агитацине лайăх организацилесĕ халăха политикăла тата хуçалăхла задачисене тултарма мобилизацилемелле. Мăн Мамăшри парторганизаци тата агитатăрсем ун çинчен манса кайнă. Акă, Буденнăй йулташ йачĕпе тăракан колхозра йалхуçалăх ертелĕн уставне пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлени курăнмаст. Колхозăн сурăх фермиче, лашасене пăхнă çĕрте пысăк йĕркесĕрлĕхсем пур, пĕрлешÿлĕ пурлăха сыхламаççĕ. Çав йĕркесĕрлĕхсене хăвăрт пĕтерме, ĕçе йĕркелесе йăма агитатăрсен пысăк ĕç тумăла. Анчах, питĕ шел, вĕсем ăна аса та илмен, пĕлмен те. Тĕслĕхшĕн, Г. Çмирнов агитатăрах илер. Вăл ĕçлеме пултарат, халăха ăнланмала, лайăх калаçусем туса иртерет. Анчах, тÿрех калас пулат, унăн начар йенĕ те пур. Вăл колхозри пурнăçпа интересленмест, ăна пĕлмест. Акă, епĕр унпа Буденнăй колхозри сурăх фермине кайрăмăр. Унта фермăри сурăхсене питĕ начар пăхни палăрчĕ. Сурăхсем ырханланса вилес патнех çитнĕ, сакăр путек вилнĕ.

— Çмирнов йулташ, есĕ çак фермăри йĕркесĕрлĕхсем çинчен пĕлнĕ-и, йĕркесĕрлĕхсем ăçтан тухса тăнине тĕпчесе, вĕсене пĕтерме тăрăшнă-и?

— Çук, пĕлмен... — тесе ответлерĕ Çмирнов йулташ. Çутруков, Григорьев тата ытти агитатăрсем çинчен те çавăн пекех калас пулат. Вĕсем те, Çмирнов йулташ пекех, колхоз пурнăçĕ çинчен тĕплĕн пĕлмеççĕ. Политикăла агитацине пурнăçпа, вырăнти фактсемпе çыхăнтармани—пысăк çитменлĕх пулса тăрат.

Халĕ, отчотпа суйлав пухăвĕ пулас май, Мăн Мамăшри пуçламĕш парторганизаци халăх хушшинче политикăла агитаци ĕçне йĕркелесе йăма тытăнчĕ. Агитколлективăн ĕç планне тунă, кашни агитатăрах уйрăм участăксем (вуншар кил) çумне çирĕплетнĕ, колхозри бригадăсемпе звеносене те агитатăрсем пур. Агитатăрсене пуçтарса çеминарсем туса иртерме руководитĕл уйăрса хунă, колхозра тата бригадăсенче çтена хаçачĕсем кăларса тăма редактăрсем суйланă.

Н. Косойкин.

Мăн Мамăш, Йшлей районĕ.

Колхозри парторгăн отчочĕ

ПАТĂРЬЕЛ, (хамăр корр.). Районри парторганизацинче отчотпа суйлав пухăвĕсем пуçланчĕç. Малтанхи отчот апрелĕн 13-мĕшĕнче „Путь Ленина“ колхоз çумĕнчи парторганизацинче пулса иртрĕ. Парторганизацинче 10 коммунис, вĕсем пурте пухăва вăхăтра пухăннă.

Антонăв парторг хăй отчотĕнче пуçламĕшĕн парторганизаци парти Тĕпкомĕн январь уйăхĕнчи Пленумĕн решенийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен чарăнса тăчĕ. Вăл уйрăм коммунissем парторганизаци умĕнче тăракан политикăла-хуçалăхла задачисене пурнăçлас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине критиклерĕ. „Путь Ленина“ колхоза вăл ăван çапса пĕтермен, çуракине те хатĕрлене çитмен.

Парторг отчочĕ тăрăх 8 коммунис пренире тухса калаçрĕç. Вĕсем парторг ĕçне çеç мар, хăйсен ĕçĕсене те критиклерĕç.

— Коммунissем мĕнле ĕçленине парторг интересленмен. Епĕ Патăрьел йалĕнчен сĕт сухăрма çеç пурăнатăп пулсан та, ман ĕçе пырса тĕрĕслемен, пулăшман. Парти вĕрентĕвне начар лартнă. Пирĕн ĕçĕ ача пур пирки звочнă конференцисене кайаймарăм, мана уйтан каларса пăрахрĕç. Халь нисĕта та вĕренместĕп, — тет Ульăнă Митрофанăва.

Ахăкин йулташ парторг Антонăвпа колхоз председателĕ пулса ĕçлене Гавриилăв йулташсем колхоза начар йĕртсе пынине хытă критиклерĕç. Ташманла елеменсем колхоз ĕçне йапахтарса йăма тăрăшнă. Парторганизаци ку ташманла елеменсене вăхăтра тăрă шыв çине кăлармарĕ.

— Пирĕн ĕçре çитменлĕхсем нумай. Колхоз ĕçĕ йапăхса кайнишĕн чи малтан епĕр хамăр айăплă. Парторганизаци ĕçне урăхлатса çĕнетес май пирĕн халех татăклă ĕçсем туса иртермелле. Чи малтан сатăрла ĕçсен йулашкисене пĕтермелле. Ку ĕçе пĕтĕм массăна мобилизацилемелле. Коммунissен хăйсен политикăла пĕлĕвĕсене куллен ÿстерсе пымала. Большевикла сыхăлăха çÿлĕ тытмала, — тет Ольга Тихонăва.

Пренире тухса калакансем парторганизаци ĕçне çеç мар, хăйсен çитменлĕхĕсене те палартрĕç. Ку çитменлĕхсене пĕтерес май татăклă обйазательствăсем илчĕç.

Пуху парторганизаци начар ĕçленĕ, тесе хак пачĕ, парторганизаци ĕçĕсене лайăхлатас май татăклă решени йышăнчĕ.

Тир-сăран савăтĕнчи агитацилĕ ĕç

Шупашкарти тир-сăран савăтĕнче агитатăрсем кашни рабочипе, кашни работницăпа Сталинла Конституципе РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали „Положенисене“ тĕплĕн ăнлантарас тĕлĕшпе большевикла агитацин пур формисемпе те усă кураççĕ.


Савăтăн кашни цехĕнчех суйлав саккунĕсене вĕренме кружоксем организациленĕ. Раскройнăй цехра кружока ПСК(б)Парти кандидачĕ стахановка Морковкина ертсе пырать. Вăл ертсе пыракан кружок савăтра пуринчен те аван ĕçлет. Занятисем ернере икшер хут пулаççĕ. Рабочисемпе работницăсем кружок занятийĕсене кĕрлен çÿреççĕ. Морковкина йулташ рабочисен пĕлмен ыйтусене тĕплĕн ăнлантарат. Час-часах хăй ертсе пыракан кружокра ыйтусемпе ответсен сехечĕсем туса иртерет.

Савăтри ытти цехсенчи рабочисемпе работницăсем те хăйсен политикăла пĕлĕвĕсене ÿстерсе пыраççĕ. Кану вăхăтĕнче пĕрлешсе хаçат-журналсем вулаççĕ. Кашни вырăнта ир умĕн политинформацисем иртереççĕ. Йулашки политинформацинче тĕнчери лару-тăру çинчен, Армйан тата Грузи ССРеспубликисен Верховнăй Совечĕсене суйламали кампани пуçланни çинчен пĕлтерчĕç.

Халĕ савăтра стахановла ĕçлесен сарăлсах пырат. Чÿвăксем çĕлекен бригада (бригадирĕ Кириллен) кашни кунхи ĕç нормине 155 процентшар тултарма пуçларĕ. Бригадăра суйлав Положенисене вĕренессине те аван йĕркеленĕ.

Д. Павлăв комсомолец рабочисене суйлав саккунне вĕрентес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçленипе пĕрлех, производствăра та паха тĕслĕхсем кăтартат. Вăл кулленхи нормăна 134 процент тултарат.

В. Васильев.



ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Сталинградри трактăр савăчĕн СТЗ—НАТИ трактăрĕсене МТС-семпе совхозсене йăма вакунсем çине тийеççĕ.
Макльецов фото- ÿкерчĕкĕнчен (Сойузфото).

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хĕрÿлĕн хатĕрленер

Пирĕн çĕршыв Сойузлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанине кĕчĕ. Грузи тата Армйан Советлă Социалисăмлă Республикăсенче суйлав кампанийĕ хĕрсе пырат.

ССР Сойузĕн Верховнăй Советне пирĕн большевикла парти мĕнле пысăк ăнăçусемпе иртернине пурте лайăх астăватпăр. Иртнĕ суйлавра коммунissемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ пит те чаплă çĕнтерÿ турĕ.

Аслă Совет çĕршывĕнчи 91 мĕлйун та 113 пин суйлавçăсем пурте пĕр çын пек пулса сталинла блок тăратнă кандидатсемшĕн сасăларĕç. Çапла туса телейлĕ те савăнăçлă совет гражданĕсем хăйсем Ленинла-Сталинла партин, унăн Тĕп Комитечĕн тата хăйсен çулпуçĕн, учителĕн—Сталин йулташăн ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн, пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеме йалан хатĕр тăнине кăтартрĕç.

Коммунисла парти çакăн пек задач лартнă: Сойузлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн суйлавĕнчен те ăнăçулăрах, тата организацилĕрех иртермеле.

Ку вăл пирĕн пулас суйлавсенче коммунissемпе партире тăманнисен сталинла блокне тата ытларах çирĕплетмелине, пур суйлавçăсен политикăлă, производствăлă активлăхне тата ытларах вăйлатмалине пĕлтерет.

Çак задачăна пурнăçа ăнăçулăн кĕртес пулсан, пирĕн парти, совет работникĕсен, культурăпа çутĕç учрежденийĕсен суйлавçăсем хушшинче массăлă-ăнлантару ĕçне организацилемеле, ăна анлăн сарса йамала. Кашни суйлавçă ССР Сойузĕн Сталинла Конституцине, РСФСР Конституцине, хамăр Чăваш республикĕн Конституцине, суйлав Положенисене отличнă ăнланса илтĕр. Ку ĕçре пĕр кружоксем организацилениппех лăпланмала мар. Чылай районти хаçатсенче „Суйлав Положенине вĕренме кружок организациленĕ“ тесе çырнисĕр пуçне урăх нимĕн те çук. Суйлавçăсем хушшинче пур майсемпе те ĕçлемеле. Йалсенче час-часах тĕрлĕ ыйтусем тăрăх пухусем пулаççĕ. Пуху пĕтсен халăх часах саланмаст. Çакăнта большевикла агитаци пулмала. Унашкал çĕрте тĕрлĕ ыйтусем, калаçакансем нумай пулаççĕ. Ĕç пĕтнĕ хыççăн та колхоз правленийĕн, йалсовет канцелйарийĕн çурчĕсене, вулав çурчĕсемпе хĕрлĕ кĕтессене йаланах çынсем пухăнаççĕ. Çаксем большевикла агитацинĕ сармали лайăх вырăн пулса тăраççĕ.

Суйлавçăсене совет çĕршывĕнчи, хамăр республикăри социалисăм строителствин çитĕнĕвĕсем çинчен, харпăр-хăй районĕн, савăчĕн, колхозăн ĕçĕсем çинчен каласа ăнлантармала. Пирĕн агитатăрсен халăха каласа памалисем нумай. Агитаци суйлавçăн политикăла тата производствăлă активлăхне çĕклет.

ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлавĕ вăхăтĕнче палăрнă, ÿссе çитĕннĕ агитатăрсемпе пропагандиссене пурне те мобилизацилемеле. Ку сахал, пирĕн çынсем кашни кун ÿссе пыраççĕ, çавăнпа та агитатăрсемпе пропагандиссен йышне куллен нумайлатмала.

Агитаци ĕçĕ предприйатисенче, колхозсенче, учрежденисенче çеç мар, суйлавçăсем пурăнакан вырăнсенче—килсенче, общежитисенче, уй-хирте, бригадăсенче, звеносенче пулмала.

Халăх тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем çинчен докладсем итлесшĕн. Ку агитацилĕ ĕçĕн ответлă участки, унта лайăх хатĕрленнĕ агитатăрсем çеç пулмала. Ку ĕçре партипе совет активне хутшăнтармала, агитатăрсене вĕрентмеле, тĕрлĕрен литературăсем парса пулăшмала.

Партире тăманнисенчен уйăрăлса каймала мар, ăна çирĕплетсе пымала тесе кăтартса панине йалан асра тытмала. Коммунissемпе партире тăманнисен сталинла блокне çирĕплетмеле, кандидатсене пĕрле тăратасси çинчен партире тăманнисемпе килĕшсе татăлмала, партипе партире тăман массăсем хушшинчи çыхăнăва тата ытларах çирĕплетмеле.

Литературă нумайрах кирлĕ

ТĂВАЙ. РСФСР тата ЧАССР Конституцийĕсемпе суйлав Положенисене вĕрентес тĕлĕшпе районра 266 агитатăра йахăн ĕçлеççĕ. Кашни агитколлектив план тăрăх ĕçлет. Колхозниксемпе колхозницăсем суйлав Положенисене вĕренме йĕркелĕ çÿреççĕ. Вĕсем тĕнчери лару-тăру çинчен те пĕлме тăрăшаççĕ. Çавна хисепе илсе, апрелĕн 15-мĕшĕнче агитатăрсене район центрне пухса тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсемпе çеминар иртернĕ.

Агитаци ĕçĕнчи çитменлĕхсенчен пĕри — вăл агитатăрсем вальли РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисем тăрăх вĕрентме кирлĕ литературăна районa çителĕксĕр кÿрсе килни пулат. Апрелĕн 10-мĕшĕнче кÿрсе килнĕ литературăна ик виç сехет хушшинче сутса пĕтернĕ. Хăшпĕр агитатăрсем халь литературăсăрах ĕçлеççĕ.

Агитмассăлă ĕçе епĕр çуракине лайăх хатĕрленесе тухассипе таччăн çыхăнтарса пыратпăр. Акă, Ленин йачĕпе тăракан колхозпа „Красная Чувашия“ колхоз ĕçĕсене илер. Вĕсем 1938 çулхи йалхуçалăх ĕççене ăнăçлăн пурнăçлассишĕн, гектартан 120-шер пăт тĕштырă туса илессишĕн сăмахпа çеç мар, чăннипех ăмăртаççĕ. Бригадăсенче агитацилĕ-массăлă ĕçе çÿлĕ пуçăма лартнă.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленсе, колхозниксен массине çуракине большевикла иртерме, мобилизацилетпĕр.

ПСК(б)П Тăвай райкомĕн çекретарĕ **Йарандайкин**.

Тÿлесе татрĕç

ТРАК. Вĕренÿ пуктинче Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билетне 200 тенкĕлĕх илсе укçине тÿлесе татрĕç. Краснов, Пушкин, Руссин тата Сушкин йулташсем 10-шар тенкĕлĕх илчĕç.

Петров.

Комсомолĕцсен пĕлÿне ÿстермеле

ИШЛЕЙ. Ентимĕркассинчи „Комбайн“ колхоз çумĕнчи комсомол комитечĕ колхозниксем хушшинче агитаципе пропагандă ĕçне лайăх туса пырат. Халĕ кашни бригадăрах РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕрентме кружоксем организациленĕ. Максимăв, В. Степанăв, Ф. Васильев комсомолецсем вишшер занйати иртернĕ те ентĕ.

Комсомол комитечĕ бригадăсенче çтена хаçачĕсем кăларнă çĕрте пулăшма, колхозниксем канмă вăхăтра хаçатсемпе журналсем вуласа пама комсомолĕцсене уйăрнă.

Анчах комсомол комитечĕн ĕçĕнче пысăк çитменлĕх пур, вăл комсомолĕцсен политикăла пĕлÿне ÿстерсе пыма тăрăшманни. Комсомолĕцсем валли политграмăтă кружокĕ тунă, анчах пропагандис йĕркелĕ çÿременнине пула занйатисем йĕркелĕ пулса пымаççĕ.

Гер. Шчербаков.

ПСÇЛКС Шупашкар хула комитечĕн VI-мĕш пленумĕ

Апрелĕн 14-мĕшĕнче ПСÇЛКС Шупашкар хула комитечĕн VI-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум ПСÇЛКС Чăваш обком çекретарĕ Никифăрăв йулташ ПСÇЛКС Тĕпкомĕн V-мĕш пленумĕн тата комсомол Чăваш Обкомĕн III-мĕш пленумĕн решенийĕсем çинчен тунă доклада сутсе-йаврĕ.

Комсомолăн Шупашкар хула комитечĕн пленуме, хăй 1937 çулти октабĕрĕн 8-мĕшĕнче М. Йакимăв („Чăваш Коммунĕ“ хаçат редакцийĕ), И. Петров (Çыхăну пайĕн уйрăмĕ), Г. Гусĕв (пединститут), М. Макарăв (3 мĕш №-лĕ шкул), Степанăва (Йалхуçалăх институчĕ) йулташсене пленум членĕнчен пĕр айăпсăрах кăларнине пăхса тухрĕ те, вĕсене пленум членне кайала илчĕ. Çавăн пекех Ив нов (Йустици Халăн Комиссариачĕ), Угльов (Ремонт савăчĕ) йулташсене пленум кандидатне кайала илмеле, тесе решени йышăнчĕ.

ПСÇЛКС Шупашкар хула комитечĕ.

Мăнкун — пусмăр тĕнчин уйавĕ

Мăнкун, пупсен йумаххи тăрăх, турă ывăлĕ вилĕмрен чĕрĕлсе тăнине асăнмали уяв пулса тăрат. Турă хăйĕн ывăлне пĕлĕт çинчен çĕр çине йанă имĕш. Вăл çĕр çинче çын пекех çÿралса ÿснĕ, пĕр тапхăр пурăннă, тĕлĕнмеле ĕçсем туса çÿренĕ пулат. Ăна тытса хĕрес çине пăталанă, тет. Вăл сасартăк чĕрĕлсе тăнă та, каллех пĕлĕт çине улăхса кайнă,— Инсус Христос çинчен йевангĕли çапла вĕрентсе калат.

Анчах йевангĕли нисĕта та вĕçне вĕçне сыхăнтараймаст. Пĕр йевангĕлисĕ пĕр тĕрлĕ çырат, тепри çавнах тепĕр тĕрлĕ çавăрса хурат. Илес, сăмахран, Христос вилсе чĕрĕлни çинчен çырнинех.

Йевангĕли калат: Инсус çынсене вĕрентсе çÿренĕ, чирлисене сиплĕнĕ, чăлаххисене тÿрлетнĕ, вилнĕ çынсене чĕртнĕ тет. Иерусалиме пырса кĕнĕ чух ăна пĕтĕм халăх кĕтсе илнĕ, тет. Анчах, тыткăна илме тăрсан, никам та пĕлмен иккен. Инсуса Иудă текен апостăл тăшманĕсен аллине тытса панă иккен.

Унтан Христоса хĕрес çине пăталаса çакнă. Матфей калат: Инсусран мĕн пур иртсе çÿрекенсем мăшкăласа кулнă, унпа пĕрле пăталанă икĕ вăр-хурах та ăна мăшкăласа хурланă, тет. Лука çырнă тăрăх, пĕр вăр-хурахĕ çеç мăшкăланă, тепри ăна чарса каланă: „Есĕ турăран та хăрамастăн-им? Пире тÿррипе айăпланă; епĕр хамăр ĕçсемпе тивĕçлипе асапланатпăр, вăл ĕнтĕ нимĕнле усал ĕç те туман“ (гл. 23, ст. 40—41).

Матфей каланă тăрăх, Инсус Христос вилсен çĕр чĕтресе кайнă, вилнĕ çынсем чĕрĕлсе тăнă, вĕсем, тупăксенчен тухса хулана пырса кĕнĕ. Лука вара вилнĕ çынсем чĕрĕлни çинчен нимĕн те çырмаст. Кунта çакна асăрхаса хăварма кирлĕ: вилнĕ çынсем чĕрĕлни çинчен каласан, Христос çинчен калакан йумах пекех, йумах пулса тăрат. Пурнăçра ун пек тĕслĕх çук, пулма та пултараймаст.

Йурат, Инсус Христос вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă пултăр. Кам курнă ăна? Никам та курман. Никамран малтан чупса пынă Марийă Магдалинă та курман. Хăçан чĕрĕлсе тăнă? „Хĕвел тухнă чух“,—тет Марк (гл. 10, ст. 2). „Шурăмпуç килнĕ чух“,—тет Матфей (гл. 28, ст. 1). „Сĕм çĕрле“,—тет Иоанн (гл. 20, ст. 1). Çапла ĕнтĕ, виççĕн виçĕ тĕрлĕ çыраççĕ. Хăшнĕ ĕненмеле? Паллах, пĕрине те ĕненме май çук. Мĕншĕн тесен унта чăнни нимĕн те çук. Пурте вĕсем етем шухăшласа кăларнă йумах пулса тăраççĕ.

Турă хăйĕн ывăлне етемлĕхе çăлма çĕр çине йанă, теççĕ пупсем. Мĕнрен çăлмала пулнă? Усалтан. Усалĕ ăçтан пулнă? Мĕн пуррине пултарнă турăх тунă иккен. Усал вăл, пупсем каланă тăрăх, иртĕхсе кайса турра хирĕç тăнă ангĕл. Апла пулсан, турă хăй пултарнă усала пĕтерме хăйĕн ывăлне йанă.

Пупсем йунтарнă йумаха итлес пулсан, çапла пулса тухат: усалĕ Инсуса пуçхире илсе кайнă, унта ăна темĕн тĕрлĕ те илĕртсе пăхнă. Инсус Христос усал илĕртнине парăнман. Çапла вара турă ывăлĕ усала çĕнтернĕ, етемлĕхе усалтан çăлнă пулат.

Анчах капиталисăмла тĕнчере ĕççыннисем халĕ те, тахçан авалхи пекех, тискер пусмăр айĕнче асап тÿссе пурăннине кам пĕлмест. Вăл ĕнтĕ çынсем „сылăхăран“ мар темле „усал“ хуçа пулса пурăннинчен мар, етем обществи классене пайланса тăнинчен килет. Çĕрĕн пилĕк улттăмĕш пайĕнче капиталиссем хуçа пулса пурăннинчен килет. Вăрçă, хĕн-хур, асап, чухăн-пурнăç, тĕрлĕ пусмăр шăнах çавăнтан, капитал пуçпулса тăнинчен килет.

Христос йачĕпе мĕн чухлĕ вăрçă вăрçнă, мĕн чухлĕ йун йухтарнă. 1914—18 çулсенчи империалисăм вăрçине те Христос йачĕпе пилленĕ. Ун чухне 18 çула çитнисенчен пуçласа 45 çул таранхи çынсене пурне те вăрçа пухса кайрĕç. Çав турă йачĕпе пилленĕ вăрçăра пĕр чăвашсем хушшинчен кăна 200 пин çын ытла пулнă. Ĕççыннисем çав вăрçăра мĕн тупанчĕç-ха? 10 мĕлйун вилĕ, темиçе вунă мĕлйун аманнă çын,—акă мĕн „тупанчĕç“. Камсем вĕсем, аманнисем? Чăлаха тухнисем, урасăр йе алсăр тăрса йулнисем, йăвăр чире кайнисем? Çынсен мĕнле „сылăхшăн“ вилмеле пулнă-ха, мĕнле „сылăхшăн“ сывлăха сухатмала пулнă? Капиталшăн, унăн сăткăнлăхĕшĕн, вăл йут çĕрсене туртса илме хыпса çуннишĕн.

Империалисăм вăрçине пуçласа йаракансем халăха çапла улталарĕç: „ку йулашки вăрçă пулат“, терĕç. Пупсем те çав йурăнах йурларĕç. Чăннипе мĕн курăтпăр? Империалисăм вăрçи хыççăн пĕр çул та вăрçăсăр иртмен. Йулашки çулсенче вăрçă сарăлнă çемĕн сарăлса пырат.

Пайанхи куна илес пулсан, тĕнчен икĕ пайĕнче тискер те хăрушă, йунлă та вилĕмлĕ вăрçă пырат. Етем обществин тăваттăмĕш пайне вăрçă хураннe кĕртсе пăрахнă. 70 мĕлйун çын пурнакан Йапони 450 мĕлйун çын пурнакан Китайа хирĕç вăрçат. Германипе Итали фашисăмĕ Испани фашисăмĕпе пĕрле Испани халăхне хирĕç вăрçат.

Китай халăхĕ мĕнле „сылăхшăн“ асап курат? Испани халăхĕ мĕнле „сылăхшăн“ асап курат? Мĕншĕн вĕсен хулисемпе йалĕсене тупăсемпе персе çунтараççĕ? Мĕншĕн вĕсен çыннисене сывлăшран бомбăсем пăрахса вĕлереççĕ? Китай халăхĕпе Испани халăхĕн мĕн пур „сылăхĕ“ те çакăнта пулат: вĕсем хăйсен çĕршывĕсем çине тапăнса кĕнĕ фашисла тискерсене хирĕç тăма хăйулăхпа паттăрлăх тупрĕç; вĕсем, пĕлĕт çинчен çăлакан килессине кĕтме пăрахса, хăйсен вăйĕпе ирĕклĕ пурнăçшăн кĕрешме тытăнчĕç.

Рабочисем хăйсен аллипе тĕлĕнмеле дворецсем тăваççĕ, хапрăк-савăтсем лартаççĕ, темĕн тĕрлĕ машинăсем туса кăлараççĕ, хурçă кайăксем çине ларса тÿпепе хăпараççĕ, карапсемпе океан тăрăх ишсе çÿреççĕ, електричĕствăпа тĕттĕм каçа çутатаççĕ, çĕр айĕнчен темĕн тĕрлĕ пуйанлăх кăлараççĕ т. ыт. те. Капиталиссем вара турă кайăкĕ пекех пурнаççĕ: нимĕн те тумаççĕ, акмаççĕ те, вырмаççĕ те, мул пухса çеç лараççĕ.

Анчах пролетариат текех чура пуласшăн мар. Вăл хăй чĕрĕлсе тăрасси çинчен, урăхла каласан, капитал пусмăрĕнчен хăтăласси çинчен шутлат. Çав тискер пусмăртан нимĕнле турă ывăлĕ те хăтарас çук. Хăтăлса çĕнĕ пурнăç тумалли пĕртен-пĕр çул—вăл вырăс рабочи класĕ кăтартса панă çул.

Пупсем райпа илĕртеççĕ, тамăкпа хăратаççĕ. Рай пĕлĕт çинче, тамăк çĕр айĕнче, теççĕ. Рабочисем пĕлĕт çине те хăпарса курнă, çĕр айне те кĕрсе курнă. Пĕлĕт çинче сывлăшсăр пуçне урăх нимĕн те çук. Тамăк çинчен калакан йумах та йумах кăна пулса тăрат. Капиталиссем ĕççыннисене валли çĕр çинче туса панă тамăкран хăрушăрах тамăк шутласа кăларма май та çук. Çав тамăкран никам та мар, пролетариат кăна çăлма пултарат.

Турă ывăлĕ ĕççыннисене пусмăрпа асапсăр пуçне урăх нимĕн те памаст. Вăл чуралăха тÿрре кăларат, капиталисла пусмăр хутне кĕрет. Пуçпулса тăракан классен хуçа пулса пурăнмала, пусмăрти классен пăхăнса пурăнмала, тесе вĕрентет. Пусмăрти классене пĕлĕт çинче рай сĕнет, експлоататăрла классене çĕр çинчех ырă курса пурăнма хушат. Ĕмĕр тар йухтарса ĕçлекенсене вăл: „çĕр çинче хăвăр валли мул ан пухăр“, тет. Çав хушăрах експлоататăрсене: „камăн пур, ăна тата та парĕç; камăн çук, унăнне йулашкине те туртса илĕç“, тет.

„Мĕскĕн кăмăллисем телейлĕ“, тет Инсус Христос, теççĕ пупсем. Ку ĕнтĕ ан ÿпкелеш, ан хирĕç, сурăх пек йăваш пул, ача пек айван пул, тенине пĕлтерет. Çын вăйĕпе пурнакансене турă урăхла вĕрентет: „ырă çимĕç паман йăвăça касса вутта пăрахмала“, тет. Çапла ĕнтĕ, харамнырсене—„пухăр“, ĕççыннисене—„чăтăр“, тесе вĕрентет.

Чуралăха хÿтĕлекен турă, йумахри турă, чĕрĕлсе тăнине уявлакан уяв—мăнкун—ĕççыннисен уйавĕ пулма пултараймаст. Вăл—пусмăр тĕнчин уйавĕ. Вăл—етемлĕхе пусмăр айĕнче усрама пулăшакан уйав.

Мăнкун лозунгĕ те: „пĕр-пĕрне ыталаса чуптăвăр“, тесе калат. Çав витĕр суйа вĕрентÿ клас тăшманĕсене йуратма, клас кĕрешĕвне пăрахма чĕнет. Сăмахран, Америкăра 12 мĕлйун çын ĕççĕр тăрса йулнă. Вĕсен ĕнтĕ хапрăк-савăт хуçисене çапла каламала: „тавтапуç сире, тусăмсем, пире выçă вилĕм умне тăратса хăварнăшăн“. Вут-хĕмпе çунтаракан Гитлĕре йе Муссолинине Испани халăхĕн çапла каламала: „йепле ырă кăмăллă есĕр, тăванăмсем, çине-çинех вилĕм йарса тăраттăр, килĕр, ыталанса чуптăвăр“, темеле. Анчах пайанхи Испани халăхĕ урăхла калат: „пайан хирĕç тăрас та, ыран çĕнтерес“—çапла унăн пайанхи лозунгĕ. Мухтавлă Испани халăхĕ çавна пурнăçа кĕртессишĕн паттăрăн кĕрешет.

Совет Сойузĕнче пусмăра, чухăнлăха, ĕç тивĕçменнине пĕтернĕ. Совет халăхĕ илемлĕ те çутă, савăнăçлă та телейлĕ пурнăç тăват. Анчах çав аслă кĕрешÿре тĕнне унăн уйавĕсем сахал мар сийен кÿреççĕ. Сăмахран, мăнкун чиркÿн чи пысăк уйавĕ пулса тăрат. Вăл ытти уйавсем пек пĕр кун йе икĕ кун мар, ерне хушши пырат. Вăл тÿрра ĕненекенсене нумайĕшне хĕрÿ ĕççенчен пăрса йарат, вĕсене прогулсем тума тĕртет. Тăшман йулашкисем тĕн хÿттипе сăтăр тума тăрăшаççĕ.

Кăçал мăнкун çуракине пĕр тĕле килет. Хĕрсе тырă акнă вăхăтра мăнкун ерни пуçланат. Çавăнпа та кăçал вăрçăлă турăсăрсен умĕнче уйрăмах ответлă задачă тăрат. Пĕр ун умĕнче кăна мар, мĕн пур малта пыракан колхозниксемпе колхозницăсем умĕнче пысăк ответлăх тăрат. Вăл—тĕн ултавне хирĕç социалисăмла уйхирте стахановла ĕçпе кĕрешес задачă пулса тăрат.

Кăçал Чăваш республикĕ нихăçан пулман вăйлă тырпулшăн кĕрешет. Çавна пурнăçа кĕртес майпа вăл Тутар республикипе тата Мордва республикипе социалисăмлă ăмăрту пуçласа йачĕ. Ăмăртура мала тухасси—чи малтан çуракине примерлă иртерниччен килет.

Ĕççыннисен хăйсен уйавĕ пур. Вăл—Майăн пĕрремĕшĕ. Çав пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн революцилĕ уйавне çĕнĕ çĕнтерÿсемпе кĕтсе илме хатĕрленесси кашнин чыслă ĕçĕ пулса тăрат.

П. ИВАНОВ.

Вăрлăх участкисем çине ытларах çавăрăнса пăхмала

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулхи ийуљ уйăхĕнче „Тĕштырăсен вăрлăхне лайăхлатмали майсем çинчен" йышăннă постановлени тăрăх, пирĕн республикăра 11 районра вăрлăх хуçалăхĕсем организациленĕ. Çав вăрлăх хуçалăхĕсенче селекцилĕ вăрлăхсене акса тăваççĕ. Сăмахран, пирĕн республикă вăрлăхсене Горькинчи селекци станцинчен илсе тăрат. Кашни вăрлăх хуçалăхĕ унăн çумне çирĕплетнĕ 2—3 районри колхозсене вăрлăхсем парса тăрат. Акă, Шупашкар районĕнчи Молăтăв йачĕпе тăракан вăрлăх хуçалăхĕн Шупашкар, Ишлей районĕнчи колхозсене, Патăрйел районĕнчи Молăтăв йачĕпе тăракан вăрлăх хуçалăхĕн Патăрйел, Шăмăршă, Йелчĕк, Шăнкăртам районĕсенчи колхозсене селекцилĕ вăрлăхсем парса тăмала.

Вăрлăх хуçалăхĕ ун çумне çирĕплетнĕ колхозсен акмали çĕр лаптăкĕнчен чĕрĕк лаптăкне акса хăварма суртлă вăрлăх хатĕрлет. Çапла ĕçлесе пур куљтурăсем тăрăх та 4 çул хушшинче пĕр хутран кайа мар суртлă вăрлăх улăштарса илсе, акса пымала пулат.

„Районри вăрлăх хуçалăхĕсенче тухăçлăха ÿстерсе пырсан, суртлă вăрлăх улăштарассине 4 çул хушшинче мар, 2—3 çул хушшинчех туса çитерме пулат.

Горькинчи селекцилĕ станци кăçал пирĕн республикăри, вăрлăх хуçалăхĕсене çуртри вăрлăхĕсем памаст. Çавăнпа та ĕнтĕ вăрлăх хуçалăхĕсен лайăх вăрлăхсене вырăнтах тупма тăрăшас пулат.

Суртлă вăрлăх хуçалăхĕ организациленĕ районсĕнче ку ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхмала, çав хуçалăхсене лайăхран та лайăх вăрлăхсем памала. Анчах, пайанхи кун тĕлне те „Диппе" суртлă сĕлĕ, „Виктория" пăрçа, „тарелочнайа" йасмăк вăрлăхĕсене улăштарса çитермен. Государствă суртлă тырă фончĕн складĕнче „Диппе" сĕлĕ çук, „Заготзерноп" хатĕрлев пунккĕсенче вăл вăрлăха суртсăр вырăнти сĕлĕпе хутшăнтарса йанă. Иккĕмĕш тата виççĕмĕш категорилĕ „Диппе" сĕлĕ вăрлăхне колхозсенче çеç тупма пулат. Çак йăвăрлăхран пăрçапа йасмăк вăрлăхĕсене алăпа суйласа тасатса хатĕрленипе çеç тухма пулат. Çак майпа вăрлăхсен тата йасмăк категорине пĕрремĕш категорине çитерме пулат. Çакă районсенчи вăрлăх хуçалăхĕсен тĕп ĕçĕ пулса тăмала.

Вăрлăх хуçалăхĕсем çуракине тĕплĕн хатĕрленсе çитмен. Районри çĕрĕç пайĕсем тата МТС-сем вĕсен ĕçĕсемпе пачах интересленмеççĕ, вĕсене пулăшмаççĕ, Шупашкар тата Вăрмар районĕсенчи МТС-сем вăрлăх хуçалăхĕсенче трактăрсемпе ĕçлеме килĕшмен. Йепреç районĕнчи вăрлăх хуçалăхĕнче Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тĕштырă акма çирĕплетсе панă плана пĕчĕклетсе, 13 гектар техникăлă куљтурă акма палăртнă.

Государствă суртлă фонд йенĕпе кăçал Вăрнар, Патăрйел, Çĕрпÿ, Йетĕрне, Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи вăрлăх хуçалăхĕсенче пысăк строительствăсем: складсем, çивиттилĕ итемсем, тĕштырăсене типĕтмелисем, тĕштырăсене усрамалисем тума тытăнмала. Укçа тенкĕ кирлĕ, анчах вăл çук. Райçĕрĕç пайĕсемпе МТС-сем кивçен паракан укçасене вăрлăх хуçалăхĕсене ытти колхозсемпе пĕр пек валеççе параççĕ.

Кунпа пĕрлех вăрлăх хуçалăхĕсене йалхуçалăх машинисем парасси те начар пырат. Машинăсене вăрлăх хуçалăхĕсен адресĕпе йараççĕ, анчах вĕсем унта çитеймеççĕ, урăх алла лекеççĕ. Акă, кăçал пĕрремĕш кварталта Йепреç районĕнчи вăрлăх хуçалăхне трийер тата клейтон панă. Апла пулин те Йепреç райçĕрĕç пайĕ вăрлăх хуçалăхне панă трийера „Çисĕм" колхоза, клейтона „Заветы Ильича" колхоза панă.

Çак тĕслĕхсем ĕнтĕ районри организацисем вăрлăх хуçалăхĕсене йапăх йертсе пынине кăтартаççĕ. Районсенчи вăрлăх хуçалăхĕсене йертсе, пулăшса пырассине тĕпрен лайăхлатмала, вĕсене акмали вăрлăхсем, минераллă удобренисем, вутпуççирен тасатмали йапаласем тата туртăм вăйĕ çителĕклĕ таран памала.

Агроном. А. Андрейĕв.

Вăрлăхсене вутпуççирен тасатаççĕ

Шăхасан районĕнчи колхозсен кăçал çуракинче 4.590 центнĕр тулă акса хăвармала. Ку шутран 3000 центнĕр тулă вăрлăхне типĕтсе, протравит тунă, йе вăл 65 процент пулат. Халĕ колхозсем урпа, сĕлĕ, пăри вăрлăхĕсене формалинпа чÿхеме хатĕрленеççĕ. Колхозсем вăрлăхсене чÿхемели йапаласене çителĕклĕ хатĕрленĕ.

Атнашри тата Чуракассинчи колхозсем çĕрулмине йаровизацилеме тытăннă. Çак колхозсенче тĕштырă вăрлăхĕсене йаровизацилеме ампарсем хатĕр.

Питтикассинчи колхозра вăрлăхсем йаровизацилеме ампарсем хатĕрлемен. „Боец", „Майан пĕрремĕшĕ", „Березовка" колхозсенче термометрсем те çук. Термометрсене района вăхăтра кÿрсе килмен.

ШĂХАСАН. (Телефон тăрăх). Апрелĕн 16-мĕш тĕлне 17 колхозра 457 гектар çура клевĕр акса, плана 20 процент ытларах тултарнă. „Çĕнĕ пурнăç", „Алешавă", „Комсомол" колхозсем клевĕр акас плансене 100 процентпех тултарнă. „Çĕнтерÿ" колхоз 90 гектар çине клевĕр акса хăварнă.

Çав хушăрах Троицкăри, Шуркассинчи, Малти Ăнтавăшри колхозсем вăрлăх çителĕксĕр хатĕрленĕ пирки клевĕр акмасăр тăраççĕ. Канашра клевĕр вăрлăхĕ нумай пулсан та çав колхозсем кайса илмеççĕ. Ушанар, Тури Сурăм колхозĕсем те хĕл вăхăтĕнче клевĕр вăрлăхне кирлĕ чухлĕ хатĕрлемен.

Районĕпе халĕ акса хăварма 20 центнĕр клевĕр вăрлăхĕ çитмест. Çакăн çине райçĕрĕç пайĕ те кирлĕ пек çавăрăнса пăхмаст.

С. С-в.

Хăйăр турттараççĕ

ЙЕТĔРНЕ. Мăн Шĕмертенри „Заветы Ленина" колхоз çулйĕр строительствинче активлăн ĕçлеме пуçларĕ. Çак кунсенче колхоз çул çине 237 кубла метр хăйăр турттарчĕ.

Н. Тимофейĕв.

ДЖАМБУЛ
Казахстан халăх йурăçи—орденоносĕц

Ордĕн илнĕ чух йурланă йурă

Джамбул халђ тăхăрвуннăра...
Йурларăм еп пĕчĕкренпех.
Анчах та тупрĕ ватлăхра
Хай телейне кăвак кедей *)

Телейлĕ еп пур çынсенчен!
Çурхи чечек пек епĕ халĕ.
Мана çамрăклантарчĕ Сталин,
Джамбул çуралчĕ çĕнĕрен.

Илеп те ордĕн аллăма,
Йурлатăп еп, тупа тăвап—
Хам хывнă пур йурра-сăвва
Çĕршывăма халалама.

Пĕрлешĕ ĕç шавпе, хирпе
Вĕçĕ ман йурă кайкăрч пек;
Çут кĕмĕлтен те тасарах,
Йан-уççăн йанрĕ ман тăмра.

Пур савăк шавлă уйаврах
Çĕршывăм илтĕ ман йурра.
Аван, хаваслă пурăнма
Ман аслă ырă çĕршывра!

Аскер**) вĕри винтовкăпа,
Джамбул йуратнă тăмрапа
Çапăçăва тухатнăр епĕр...
Кăвар пек хĕмлĕ йурăпа
Тăшмансене çунтарăп епĕ.

Анчах çулпуçшăн хывăп, йурлăп
Еп хамăн чи паха йурра;
Манпа пĕрле мухтавлăн йурлĕ
Телейлĕ халăх ман йурра.

Ес, Сталин,—çĕн кунсен хĕвелĕ,
Ес хаклă, çывăх пуринчен;
Тăван аттемĕр, ĕмĕрнех ес
Пурăнăн халăх чĕринче!

Санпа хавхаланса, çулпуçĕ,
Еп таврăнап Казахстана,
Тапса тăран çăлкуç пек уççăн
Йантратăп хÿхĕм йуррăма.

Чĕресене çул хывăп, çÿрĕп
Тăван çеçен уйхирсенче;
Куллен хаваслăраххăн йурлăп
Еп хам тăван çĕршыв çинчен!

1936. Н. Йанкас куçарнă.

*) Кедей—чухăн.

**) Аскер—хĕрлăармейĕц.

Май уйавĕ умĕн

Уйăх планне тултарчĕ

Деткомиççин Шупашкарти хапрăкĕ Май уйавне çитĕнÿсемпе кĕтсе илет. Апрелĕн 17-мĕшĕнче хапрăк хăйĕн уйăх планне 103 процент тултарчĕ.

Халђхи вăхăтра цехпа цех, бригадăпа бригада тата уйрăм рабочисем хушшинче ăмăрту сарăлсах пырат. Бондарнăй тата çăматă йăвалакан цехсем плана йаланах 120—150 процент таран тултарса ĕçлеççĕ.

Уйрăм стахановĕцсем: Тимофей Морозăв, Александр Петров, Александрă Сорокинă, Долгорукăвă, Болдырĕвă йулташсем йулашки вăхăтра татах та лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç. Апрелĕн 17-мĕшĕнче Морозăв комсомолĕц пĕр кунхи нормăна 170 процент, Петров—175 процент Болдырĕвă—155,9 процент тултарнă.

В. Йакăвлĕв.

Çĕнĕ ертелĕн малтанхи ĕçĕсем

ТУТАРКАС. Çармăскассинче „Дуб" ертеле кăçал кăна организациленĕ. Ертел тĕрлĕрен урапа тавраşĕсем тата пукансем тăват. Кăçал 5000 пукан туса кăлармала. Пайанхи куна 1345 пукан туса хатĕрленĕ те ĕнтĕ. Пукансене тĕрлĕрен организацисене тата уйрăмăн та сутаççĕ.

Халĕ ертел çумĕнчи пукан тума вĕрентекен 3 уйăхлăх курс ĕçлет. Унта 26 çын вĕренеççĕ. Вĕреннĕ хушăрах практикăла ĕçсем те пулса пыраççĕ. Курс çак кунсенчех хăйĕн ĕçне вĕçлемеле. Вара курсран вĕренсе тухнисем пукансем тунă çĕрте ĕçлеме пуçлаççĕ. Практикă вăхăтĕнче хăшпĕр йулташсем лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç. Матвейĕв курсант 62 пукан пуçтарса плана 150 процент тултарчĕ. Çавăн пекех Вас. Залин кашни куллен 41 пукан пуçтăрса плана 130 процент тултарат. Лайăх ĕçлекенсем хутшăнсах пыраççĕ.

Каннă хушăра вăхăта кулђтурлă иртерме ертелĕн пур условисем те пур. Клубра биллиард, шашкăшахмăт, домино, хаçат-журналсем, 400 тенкĕлĕх кăçал туйанна çĕнĕ библиотека пур. Ертелте ĕçлекенсем вăхăта йаланах çакăнта иртереççĕ. Вăтамран шутласан 200 çын активлă вулакансен шутĕнче тăраççĕ. Самушков йулташ кăçал Шолахăвăн „Уçнă çĕрем", Горькин „Амăшĕ", Островскин „Тăвăлпа çуралнисем" йатлă кĕнекесене вуласа тухрĕ.

Çитес кунсенче ку клубра Островскин „Тăвăлпа çуралнисем" кĕнекине вулакансен конференцине туса ирттереççĕ.

Прок. Йаргуђкин.

Колђцовкăри (Вăрнар р.) Сталин йачĕпе тăракан колхозри 10 çул вĕренмели шкулăн çурчĕ.

Тренин фото-ÿкерчĕкĕ.

Чукунçул строительствинче

Апрелĕн 20-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе 64,8 километр тăршшĕ лини хывнă. Шупашкар станцине çитиччен 36 километр йулнă.

Малашне лини хывассине хăвăртраххăн илсе пыма лайăх условисем пулаççĕ. Лини хывмали вырăна аван йакатса хатĕрленĕ, çĕр типсе пырат. Апла пулсан, çирĕп график тăрăх ĕçлеме тытăнмасăр тăма нимĕнле сăлтавсем те çук. Руководительсем, маçтăрсем, техниксем пĕтĕм ĕçе социалисăмла ăмăртупа стахановла йухăма массăлăн вăйлатнă никĕс çинче организацилесен ĕç хăвăрттăн малала кайма пултарат.

Анчах та халђхи вăхăтра ĕçре тивĕçлĕ тимлĕхпе ĕçлени курăнмаст-ха. Бригадăсем хушшинче социалисăмла ăмăртува вăйлатман. Ĕç дисциплини сÿрĕк. Массăлă агитаци ĕçĕ çителĕксĕр пулса пырат. Пысăк ответлăхпа ĕçлесси çук. Çавсене пула час-часах простойсем пулаççĕ. Рабочисен активлăхĕ йавашланат.

Капла ĕçлеме йурамаст. Чукунçул строительстви руководителĕсен Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн Х-мĕш Çессийĕ кăтартса панисенчен халех тивĕçлĕ вывăдсем туса, ĕçе тĕпрен лайăхлатмала. Пĕтĕм ĕçе çулталăк варринче рабочи, пойасем çÿреттермелле тăвас май организацилемеле.

Станцă, службă çуртсене, хывнă линисене йусаса пуйăссем çÿремеле тăвассине те хăвăртламала. Халĕ ĕнтĕ чукунçула тăвас ĕçĕн ответлă тапхăрĕ пуçланчĕ, ответлă тапхăрта пысăк ответлăхпа, организацилĕхпе ĕçлени кирлĕ.

Çамрăксем çар училищине кайаççĕ

Çамрăксем хăйсене çар училищисене вĕренме йама ыйтса, Чăваш АССР Çар Комиссариатне зайавленисем йышлăн пама пуçларĕç. Зайавлени панисем пурте 9 çултан кайа мар вĕреннисем. Апрелĕн 10-мĕшĕнче зайавлени панă йулташсен сывлăхĕсене комиççи тĕрĕслерĕ. Комиççире çамрăксен сывлăхĕ çирĕппи палăрчĕ.

Çар училищисене çамрăксем пысăк хаваслăхпа кайаççĕ. Вĕсем хĕрлĕ командирсем пулас тесе пĕтĕм вăйа хурса çар ĕç техникине вĕренме пулаççĕ. Акă, пединститутра вĕренекен Петр Карпейĕв ЧАССР Çар Комиссариатне çапла зайавлени çырса парат: „Епĕ пĕтĕм чĕререн хĕрлĕ командир пуласшăн. Хĕрлĕ командир пулса, тăван çĕршыва сыхлама йалан хатĕр пулатăп."

Петр Карпейĕвăн амăшĕн 7 ача, Петр хăй 1919 çулта çуралнă. Комиççи ăна çирĕп сывлăхлă, тĕрĕ. Унăн ĕмĕчĕ пурнăçа кĕнĕ.

Çĕнйал Хуракасси (Тутаркас р.) Г. Акимăв топографи ĕçне ытларах йуратат. Вăл топографи училищине вĕренме йама ыйтса зайавлени панă. Шупашкарти стройтехникумра вĕренекен Н. Çеменăв зайавленине çапла çырат: „Тăшмансем Совет Сойузне кураймаççĕ, вĕсем пирĕнтен телейлĕ те савăнăçлă пурнăçа туртса илесшĕн. Çакă мана Хĕрлĕ Çарăн çирĕп командирĕ пулма чĕнет. Хăвăр мĕнле училищăна йама шутлатăр, çавăнта йама ыйтатăп."

Çар училищисене вĕренме кайас текенсен йышĕ уйрăмăнах Ишекри вăтам шкулта, Шупашкарти стройтехникумра тата пединститутра пысăк.

В. Цыпленкăв.

Пĕлÿ тĕрĕслевĕ пуçланас умĕн

ЙЕЛЧĔК. Тăрмăшри тулли мар вăтам шкул кăçалхи вĕренÿ çулĕн виççĕмĕш чĕрĕкĕнче паха резуљтатсем пачĕ. Ачасем шкула лайăх çÿреççĕ, ăнăçлăн вĕренеççĕ. Пĕрремĕш чĕрĕкре вĕренÿре ĕлкĕрсе пыракансен хисепĕ 91,9 процент пулнă пулсан, иккĕмĕш чĕрĕкре 95,2 процента, виççĕмĕш чĕрĕкре 96,9 процента çитрĕ. Вĕренÿ пахалăхне хăпартассишĕн учительсем тăрăшса ĕçлерĕç. Çамрăк учительсене пулăшу парас майпа кăçал 6 хутчен кăтартулă урокcем туса ирттернĕ.

Урокcем пуçланиччен ачасене тĕнчери лару-тăрупа ССР Сойузĕнчи çитĕнÿсем çинчен каласа памали кĕске вăхăтлăх политинформацисем пулса иртеççĕ. Шкулта 6 политкружок ĕçлет. Кружоксенче 210 ача вĕренет. Занятисем план тăрăх ернере пĕрре пулаççĕ.

Шкулти пионер организаци те йĕркелĕ ĕçлет. Кашни отрйадăн, звенон ĕç планĕ пур. Отрйадра та, звенора та сборсем планпа пулса пыраççĕ.

Шкул çумĕнче стена хаçачĕсем тухаççĕ. Стена хаçачĕсем вĕренÿ пахалăхне хăпартас ĕçре пысăк пулăшу параççĕ. Кунсăр пуçне ачасем хор, фото, физкуљтурă, литературă кружокĕсем организациленĕ.

Кружоксем ачасен пултарулăхне, вĕсен клас тулашĕнчи вăхăтне йĕркелеме пулăшаççĕ. Епĕр çуркуннехи пĕлÿ тĕрĕслевĕсене пур йенĕпе те лайăх кĕтсе илесшĕн.

Ф. Белђайĕв.

Чăвашла учебниксем çинчен

ПСК(б)Парти Тĕпкомĕ шкулти вĕренÿпе воспитани ĕçĕнче учебниксен çирĕплĕхĕ, вĕсен пахалăхĕ пысăк вырăн йышăнса тăнине уççăн кăтартса панă.

Анчах пирĕн шкулсенчи пур учебниксем те ПСК(б)Парти Тĕпкомĕ тăратнă ыйтусене ответлеме пултараççĕ-и? Çук, пурте мар.

Акă чăваш шкулĕсенчи учебниксене илер. Чăваш шкулĕсенчи учебниксем иккĕ пайа уйăраççĕ: пĕрисем, вырăсларан куçарнисем—географи, физикă, хими, ботаникă, математикă т. ыт. дисциплинăсен учебникĕсем; иккĕмĕшĕсем, оригиналлă учебниксем—„Чăваш литературн" т. ыт. те.

Малтан оригиналлă учебниксене пăхса тухар. Кунта чи малтан М. И. Çироткин пухса хатĕрленĕ вăтам шкулсенче вĕренмели „Чăваш литературн" кĕнекисем çинче чарăнмала.

Вăтам шкулсенчи VII-мĕш класенче вĕренмели „Чăваш литературн" кĕнекине ÿссанах Иван Мучи çырнă „Турă йачĕпе, патша хушнипе" произведени куç умне ÿкет. Ку произведенинĕ çийелтен пăхса тухсан нимĕнех те çук пек. Чĕлхе ăнланмала, çăмăл. Анчах, ăна историлĕ чăнлăх йенчен илсен, унта пысăк йăнăш пур.

Произведенин содержанийĕ çапла. Патша хушнипе, 1765 çулсенче, чăваш халăхне пупсем, тÿре-шара тата çар пулăшнипе, ирĕксĕрлесе христос тĕнне йышăнтараççĕ. Чăваш халăхĕ ку тĕне йышăнасшăн мар, вăл çав пусмăра хирĕç тăрат. Пĕррехинче çапла, христос тĕнне йышăнтарассине хирĕçлеме пухăннă пухура чăваш хресчĕнĕсем хăйсене хĕсĕрлекен пупа вĕлерме йышăнаççĕ. Вара çав пухурах, Арсупай(произведенин тĕп геройĕ)йертсе, пынипе, Хĕрлĕ Чутайа пупа вĕлерме кайаççĕ. Анчах, пуп килĕнче пулман пирки, вĕсем пупа вĕлерейменсĕр таврăнаççĕ. Кайран пуп, хăйне вĕлерме пынине пĕлсен, çиленсе, ку йала пырат те, Арсупай кил-çуртне вут тĕртет. Пушарпа пĕтĕм йал çунса кайат. Хресченсем вута пуп тĕртнине пĕлеççĕ те, ăна шыраса тупса вĕлереççĕ. Кайран тепĕр Кăрмăш йалĕнчи пуп — Йерми тата казаксем чăвашсем патне пырса пупа вĕлерекенсене шыраççĕ. Анчах нихăçан та каламаст. Хĕнесе асаплантарса тĕпчеççĕ — усси çук. Тепĕр кунне сăсартăк, пуппа казаксем халăха хăваласа пуçтараççĕ те, пуп кăтартнă тăрăх халăх хушшинчен 25 çынна арĕслеççĕ, вăл шутрах Арсупай та лекет. Вара вĕсене суд тăваççĕ, ĕмĕрлĕхех каторгăна йараççĕ.

Çапла ку тĕрĕс пулнă тейĕпĕр. Анчах вулакансем çак произведенире чăваш халăхĕн йавăр аваллăхĕнче тепĕр йавăрлăхне курмаççĕ. Произведенин автăрĕ кунта вăл вăхăтри чăвашсен хăйсен кулакĕсемпе куштанĕсем çинчен шарламасăр иртет. Автăр „ĕнентернĕ" тăрăх, чăвашсене христос тĕнне йышăнтаричченех вĕсем пурте „пĕртан" пулнă, вĕсене никам та „пусмăрламан".

Савнашкалах ытти класенче вĕренмели произведенисенчен те хăшпĕрисем пахалăх тĕлĕшĕнчен питех те айалта тăраççĕ. Сăмахран, кăçалхи 1937—38 вĕренÿ çулĕнче V-мĕш класра вĕренмели программăна **Г. Савкайа** кĕртнĕ. Г. Савкайăн программăна кĕртнĕ **„Салма Ваççи"** тата **„Чапкăн"** произведенисене вуласассăн тата вĕсене чăннипе программăра мĕнле произведенисем пулмалипе танаштарсассăн, чăнах та, пиççе çитмен улмана татса çинĕ пекех туйăнат. „Салма Ваççипе" „Чапкăн" произведенисем программа тăрăх сÿтсе-йавса вĕренме мар, клас тулашĕнче вулама çеç усăлă пулмала.

Çак тĕслĕхсем ĕнтĕ Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ, уйрăмах „Чăваш литературн" кĕнекисене пухса хатĕрлекен М. И. Çироткин çав терийех ответлă ĕç çине сăмаллăн пăхнине, программăна кĕртме палăртнă произведенисене пур йенчен те сÿтсе-йавса тĕпчеменнине кăтартса параççĕ.

Малала вырăсларан куçарнă учебниксем çинчен. Кунта епĕр, чи малтан çав учебниксене чăвашла мĕнле куçарнине пăхса тухасшăн. Тÿрех калас пулат, куçаракансем учебниксене çĕршер пин совет вĕренекенĕсем умĕнче нимĕнле ответлăха туймасăр куçарнă. Темиçе ĕмĕр хушши тĕпченсе çирĕпленнĕ ăслăлăх сакунĕсене нимĕн шеллемесĕрех пăсса пĕтернĕ.

Акă пурне те тĕлĕнтермели фактсем.

Вăтам шкулти VI класра вĕренмели **„Тĕнче пайĕсен географийĕ"** учебникра 218-мĕш страницăра, çакăн пек вырăн вулатпăр:

„Нйуфаундленд утравĕ çумĕнче... аслă ăшăхлăхсем вырăтаççĕ, **çав ăшăхлăхсенче пулă çисе пурăнакан шыври ÿсентăрансем** тата вак чĕрчунсем нумай".

Ăнланмастпăр, мĕнле ÿсентăрансем вĕсем „пулă çисе пурăнакан шыври ÿсентăрансем? Пулă çисе пурăнакан ÿсентăрансем ботаникă ăслăлăхĕнче те, географи ăслăлăхĕнче те çук.

Акă вырăсла текст:

„У острова Ньюфаундленда... находятся обширные мели; здесь в океане обитают много водорослей и мелких животных, которыми **питаются рыбы**".

Кунта пачах урăхла, ăнланмала та. Ÿсентăрансем мар пулăсене, пулăсем ÿсентăрансене çиеççĕ.

Тепĕр факт.

Вăтам шкулсенчи VII-мĕш класенче вĕренмели „ССРС физикăлă географи" учебникра, 79-мĕш страницăра, шултăра саспаллисемпе çырнă çакăн пек заголовак вулатпăр: „Хĕвеланăç Иевропă тÿремĕнчи кÿлĕсем". Ăçтан тупнă-ши ку тÿреме? ССР. Сойузĕн территоринче Хĕвеланăç Иевропă тÿремĕ çукçке!

Çаксем ĕнтĕ Чăвашиздатри „штатлă" куçаракансем тата Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариатĕнчи ку ĕçпе ĕçлекен работникĕсен географи ăслăлăхĕнче ăна-кăна сахал чухланине, хамăрăн тăван çĕршывăн территорине пĕлменнине кăтартмаççĕ-ши?

Ку сахал: Куçаракансем ăслăлăх терминĕсене улăштарса пăтраштарса пĕтернĕ. Сăмахран, „водораздел" сăмаха V-мĕ класра вĕренмели „Физикăлă географи" учебникра „шывчикки" тесе куçарнă, VI класра вĕренмели „Тĕнче пайĕсен географийĕ" учебникра „шывуйăран" тесе куçарнă. Пĕр сăмахна каласан, V—VII класем валђли кăларнă пур учебниксенче те наукă тĕрĕслĕхĕсене, географилĕ вырăнсемпе облăçсен йачĕсене пăтраштарса пĕтернĕ. Кашни куçаракан хăйĕншĕн ăрасна „терминсем" шухăшласа кăларнă, хăйсем ăссĕнех, цифăрсене те улăштарса пĕтернĕ. Кунсăр пуçне, ку учебниксенче грамматикăлă, орфографилĕ, стилистикăлă йăнăшсен вĕçĕ те çук.

Вывăд пĕрре çеç пулмала. Асăннă учебниксене пурне те çĕнĕрен йусаса кăлармала. Анчах та, вăл учебниксене куçарас ĕçе издательствăсенчи „пурйеплĕ" куçаракансене мар, кашни ăрасна ăслăлăх учебникĕсене çав ăслăлăхпа ĕçлекен пысăк стажлă педагогсене йавăçтарас пулат. Çавăн чухне кăна шкулсене чăннипех пысăк пахалăхлă çирĕп учебниксем пама май пулĕ.

Пирĕн шкулсенчи тепĕр пысăк çитменлĕх — вăл ачасем валђли учебниксĕр пуçне, урокенче вĕренекен ăслăлăх фактсемпе навыкăсене çирĕплетме пулăшакан урăхла нимĕнле материалсем те (наглядные пособия) çукки. Чăнах та, пирĕн шкулсенче ачасене уйрăм предметсем тăрăх клас тулашĕнче вуламали кĕнекесем, наукăлă-популярлă, илемлĕ литературă кĕнекисем вуçех çук темелĕ. Мĕншĕн-ха физикă, хими, математикă, географи наукисем тăрăх ачасене интереслентерекен кĕнекесем куçарса кăлармала мар. Кунсăр пуçне, вырăс писателĕсен нумайĕшĕн, — М. Горькийĕн, М. Пришвинăн т. ыт. те тайгари пурнăç çинчен, ÿсентăрансемпе чĕрчунсем çинчен çырнă кĕске те интереслă калавсем нумай. Мĕншĕн вĕсене куçарса пичетлемеле мар? Саксем ачасене наукăсен никĕсне тарăнăн, анлăн тата нихăçан та манмала мар ăнланса илме, ачасен изобретени пуçарăвĕсене чĕртсе йама питех те пысăк пулăшу парĕччĕç.

Çакăнпа пĕрлех тата акă мĕн çинчен каламала. „Чăваш литературн" учебниксенче пичетленнĕ произведенисене сÿтсе-йавма, çав учебниксенче пичетленĕ ик-виç йĕркелĕ „кăтартусемсĕр" пуçне, урăх нимĕнле материал та çук. Вăл учебниксенчи произведенисене критикă парас тĕлĕшпе Чăваш Совет писательĕсен сойузĕн правленийĕ те, „Чăваш Коммунĕ" хаçат та, çаплах ытти хаçатсемпе журналсем те нимĕн те ĕçлемеççĕ.

Шкулсенче клас тулашĕнче вуламалли илемлĕ литературă та сахал. Уйăнкал литературă, пуринчен ытла, V—VII-мĕш класенче вĕренекен ачасем валђли питех те çителĕксĕр. Çакă вăл Чăвашиздатăн ача-пăча литературн сектăрĕн чи пысăк çитменлĕхĕ пулса тăрат, тата вăл сектăр ачасен ку тĕлĕшри калама çук хăвăрттăн та пысăккăн ÿсекен ыйтăвĕсенчен питех те кайа йулса пынипе кăтартат.

Асăннă çитменлĕхсем вĕренÿ ĕçенче ачасене партипе правительствă ыйтнă таран пĕлÿлĕх парас ĕçре питĕ чăрмантараççĕ. Вăл çитменлĕхсене халех тÿрлетсе çитермеле, — шкулсенче тĕрĕс çирĕп те паха учебниксем пулмала.

В. ЙУДИН.

Хаçатсене пăхса тухни

Редакцинчи ответсăрлăх

„Колхозник сассиĕ" хаçата (ПСК(б)П Шăмăршă райкомĕн органĕ) çырăнса илекенсем килĕнсе вулаççĕ теннне никам та ĕненес çук. Редакцинче ĕçлекенсем хăйсен хаçатне вулакан çынсене хисеплемешнн кашни номертех палăрса тăрат.

Шăмăршă районĕнче колхоз шкулĕ пур. Анă колхозниксем „район колхоз шкулĕ", теççĕ. Хаçат „РШ" тесе çырать. Пирĕн хаçатсем пурте „парти уйрăм членĕсем" тесе çырни вырăнне шăмăршăсем — „уйрăм парти членĕсем", теççĕ. „Йышăннисем" вырăнне — „йышăнисем", „пулса иртрĕ" вырăнне „пуда иртрĕ", „унта ĕçлеççĕ" вырăнне — „нта ĕçлеççĕ", „вăрман хатĕрлевĕ" вырăнне „Вăрман хатĕрлевĕ" тесе çырнисем. „Колхозник сасси" хаçатăн кашни номерĕнчех пур. Хаçатра районти çĕрĕс пайне тĕрĕс çырма пĕлменнипе тăрăхласа статья пичетленĕ: Çав статьана пĕлхипе каласан редакцинчи йулташсем „хăйсем те кам та тĕрĕс çырма тăрăшмаççĕ".

Ку хаçатăн чĕлхипе йăланма йăнăшрри çакăнтăн та лайăх курăнат (15 мĕш номер): „Тухăçлă тырпул туса илессипе çĕр тарăнăх сухалани пысăк вырăнта тăрат". „Тăвассипе", „илессипе", „кайассипе"... пысăк вырăнта тăрат тенисем вулакансене йĕрĕнтерсе çитермелĕхех нумай.

Тата тепĕр тĕслĕх:

„Машинăсем колхозсенчи ĕç организаторĕсем пулса тăраççĕ", тесе çырат хаçат. Колхозри ĕçсен организаторĕсем, машинăсемпе ĕçлессипе организацилекенсем — çынсем: колхоз правленин председателĕсем, бригадирсем, звеноводсем, стахановецсемпе ударниксем пулса тăраççĕ вет!

22-мĕш номерте çапла çырса хунă:

„Сталинла Конституци ССР Союзĕн Конституцийĕ çине Октабĕрти çĕнтерусене çырса хуçĕ".

Çакна çырнă чухне редактăр мĕн çинчен шухăшлана-ши? Хаçат „пирĕн районра нимĕн пĕлмесĕр сӳнĕлтетекенсем пур", тесе çырни шăп та шайах хăйне пырса тивет.

Анчах, нит шеллемеле, хаçат редакцинчи ответсăрлăх, хаçатра пысăк йăнăшсем тухни ПСК(б)П Шăмăршă райкомне паçархантармаçт пулмала.

Хăйĕн хаçатне йĕртсе пырасси райкомăн обязанноçĕ пулса тăрат.

Партин йĕртсе пырас ĕçне çĕнĕ работниксем хутшăнаççĕ

ХАРЬКАВ. Сичĕ кун хушшинче Харькав облаçĕнче отчотпа суйлав пухăвĕсене пурĕ 100 пуçламĕш парторганизацинче туса ирттерĕç. Парт организацисен составне 200 коммунист суйланнă. Вĕсенчен 55 коммунисчĕ партин йĕртсе пырас ĕçĕнче пирвайхи хут пулаççĕ.

Пухусем пысăк активлăхпа тата организацилĕхпе ирттĕççĕ. Коммунистсем парткомсене большевикла критиклеççĕ, партилĕ ĕçри çитменлĕхсене çивĕччĕн, большевикла палартаççĕ. Пухусенче пулна 928 коммунистран прениĕсенче 664 çын тухса каласнă.

(ТАСС).

Йапони влаçĕсем совет территорийĕ çинче 7 Йапонин çар самолотне тытнă факта пытараççĕ

ВЛАДИВОСТОК, апрелĕн 18-мĕш. (ТАСС). Кунта илнĕ сведенисем тăрăх, Йапони военщинин апрелĕн 11-мĕшĕнче совет территорийĕ çинче Йапонин 11 çар самолочĕ вĕçнĕ факта тата вăл самолотсенчен перне, советăн чикĕри влаçĕсем тытса чарнă факта Йапони общественноçĕнчен пытарнă.

Çавăн пекех Йапонин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ совет правительстви Йапони правительствине тăтăкла претензисене хире-хирĕç йĕркелесе йăма çĕннипе ку таринчĕнех хăйĕн общественнăçĕнчен пытарса пурăнат, вăл çеçу çинчен Халăх Комиссарĕ Литвинав Йапони посолĕпе „Сигемицупа калаçнă чухне каласа, панипе апрелĕн 5-мĕшĕнче ТАСС пĕлтернĕ.

Çак пĕчĕк мар фактсем çинчен Йапони хаçачĕсем пĕр сăмах та пичетлесе каларман.

Германи Испанине çĕнĕ çарсем йарат

ПРАГА. „Дейче Фрейхейт" хаçат Германирен Испанине çĕнĕрен çар чаçĕсем йани çинчен пĕлтерет. Испанири пăлхавçăсен çарне салтаксем пухса йарасси Германи çĕрĕнче кăна мар, тата ку ĕç штурмовиксем хушшинче те анлăн сарăлса пырат. Нумайăх пулмаст Кельн хулинче тата Рейн облаçĕнчи ытти хуласенче штурмовиксен вырăнти организацийĕсем уççăнах „салтаксем пухмалли ернелĕх" туса ирттернĕ. Испанине çарсем йарас тĕлĕшпе екскурсисем организацилессипе анлăн усă кураççĕ. „Екскурсантсене" пысăк ушкăнĕсемпе Испани Мароккине, çавăн пекех Итали порчĕсене ăсатаççĕ, унтан вара — пăлхавçăсен çарне йараççĕ. Испанине кайакан кашни салтаках парахут çине лартнă чухне 500 маркă укçа парат, Франко лагерне илсе çитерсен вĕсене каллех 1000 маркă параççĕ.

(ТАСС).



Англири ĕççыннисем общинăсен палатине тавар хакĕ хăпарнине тата ĕçукçи чаннине хирĕç протеслесе 750.000 çын ала пуснă петицине тăратнă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Петици илсе килнĕ представителсем.

(Союзфото).

Чемберлен Германипе калаçу пуçласшăн

ПАРИЖ. Гавас агентстви Лондонран радиопа пĕлтернĕ тăрăх, Чемберлен çак уйăх хушшинче Германипе калаçусем пуçлама шутлат. Англипе Германи хушшинче Англипе Итали хушшинчи пек килĕшӳ тума май килмесен, Англи премьерĕ Англипе Германи хушшинчи çыхăнăва та пулин лайăхлатма хăтланса пăхĕ, тесе шутлаççĕ. Анчах, — тесе пĕлтерет малала агентства, — Англи кабинечĕн членĕсенчен чылайĕшĕ Чемберленăн çак шухăшне хирĕç тăраççĕ. Вĕсем: хальхи вăхăтри условисенче Германипе килĕшӳ тума май çук, мĕншĕн тесен Германи майлă тунă кашни уступка ăна вăтам Йевропăра çĕнĕ выступленисем тума пулăшат, — тесе шутлаççĕ. Агентствă пĕлтернĕ тăрăх, лайăх пĕлсе тăракан çынсем хушшинче çапла калаçççĕ: çак ыйтăва Лондăна Франци делегацийĕ пырсан татпратмала пулат, — теççĕ.

Çав çынсем каланă тăрăхах — тесе пĕлтерет агентствă, — Чемберленпа Галифакс Франци делегацине Италипе Франци хушшинче Англипе Итали хушшинчи пек килĕшӳ тума сĕнмеле.

(ТАСС).

Тата лайăхрах ĕçлеме пулат

Антонина Димитрийĕвă йулташ Айаткасри „Малала" промысла ертелте (Шупашкар р.) чылайранпа ĕçлет. Хальхи вăхăтра вăл корçинкăсем тăват. Кăçалхи çулăн пĕррремĕш кварталĕнче Димитрийĕвă йулташăн 551 тенкĕлĕх корçинкă тумала пулнă, вăл 986 тенкĕлĕх туса кăларса, квартал планне 179 процент тултарнă.

Димитрийĕвă йулташ туса кăларакан корçинкă пахалăх йенчен те аван, брак тухни пулман. Иккĕмĕш кварталта татах та пысăк усĕм тума обязательства илчĕ.

Кустпромсойуз Димитрийĕвăн чаплă ĕçне хакласа, ăна преми пама палартнă.

Н. Иашков.

Тĕрĕсленĕ заметка

** „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцине Алексейĕв йалкор: Иелчĕк районĕнчи Çĕнĕ Тĕмерти пуçламĕш шкулта ачасене йĕркелĕ вĕрентмеççĕ, шкул пуçлăхĕ Красновă шкула кун сиктерсе çӳрет, ачасене задани парса хăварат те, килне кайат, 2-мĕш класа вĕрентме икĕ уйăх хушши учител çук, тесе çырнăччĕ.

Заметкăна ЧАССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ тĕрĕсленĕ. Йалкор çырса пĕлтернĕ фактсем пĕтĕмпех тĕрĕс пулнă. Красновă учительницăна шкул пуçлăхĕнчен кăларнă. Хальхи вăхăтра шкул аван ĕçлет.

Çулйĕр бригади

ЕЛĔК. Шĕнтрешри Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз кăçалхи çул вырăнти çулйĕр строительствинче ĕçлеме йăтарласах 5 çынтан бригадă организацилерĕ. Ку бригадă çумне 3 лаша çирĕплетнĕ.

Халĕ бригадă çулйĕрсене йусас ĕçе тытăнчĕ.

Н. Львов.

Аптраса çитнĕ наукă

Соцегиз „Наука в тупике" йатлă кĕнеке кăларнă. Унта Англи учонăйĕсем, специалиссем капиталисăмла çĕршывĕсенчи наукă мĕнле вырăнта тани çинчен çырнă статьясене кĕртнĕ.

Интереслă фактсемпе çак учонăйсем капиталисăм тата фашисăм наукăпа техникăна малала ӳсме чарнине лайăх кăтартса пана. Капиталисăм тата фашисăм наукăпа тĕпчев шухăшне çынсене пĕтермели, империалисăмла çитес вăрçа хатĕрлемели ыйтусемпе чарса ларнă.

„Наукă тата промышленноç" йатлă статьйара профессăр Дж. Б. Бернал кучухнехи капиталисăм наукăпа техникăна малала кайма тӳрех картлат, йулашки çулсенче наукă ĕçĕнче туна пысăк ĕçсене йурийех чарса тăрат, тесе çырат. Наукă ĕçĕнче туна çитĕнӳсем, çĕнĕ ĕçсем-хапăрсават хуçисене, капиталиссене пысăк услам памасан, наукă ĕçĕсене пур майсемпе те чарса пыраççĕ.

„Пире техникăла ĕç мар, пуринчен ытла економикăла фактсем кайала туртаççĕ, — тесе çырат професăр Бернал. — Машинисемпе çынсем çине производствăран ытларах тупăш илме пулăшакан тăкакĕсене пăхнă пек пăхаççĕ. Машинăсене чи йӳне ĕçвăйĕпе усă курма çеç конструкцилеççĕ. Ку вăл механически изобретени шухăшне хирĕç тăрат. Машинăсене рабочи интерессĕсене кура конструкцилесен, машинăсем çинче ĕçлеме интереслĕрех пулна пулĕччĕ, уй пек чухне машина çинче ĕçлеме йалхуçалăхĕнче ĕçлениччен тата ухатăра çӳренинчĕн те сăмалтарах пулна пулĕччĕ".

Нумай конкретла примерсем тăрах, Бернал професăр наукă шухăшне пите çулĕ вися̆сене çитни, промышленноçăн кирек мĕнле отраслйнче те наукă тĕлĕшĕпе çĕнĕ ĕçсем туни производствăра переворот тума пултарнине кăтартат.

Тăватă çул кайала лабораторисенчен пĕринче кантăка сармали май тупнă пулнă. Çак çĕнĕ ĕçĕн хакĕ ака мĕнре пулнă: кантăк сас кĕртмен, вăл пробкăран та çăмăл. „Астăнпа тытса тăракан кирек йепле общĕствăра та çакнашкал кантăк тăвассине йĕркелесе йамала пулнă. Анчах та, вăл тĕлĕшпе ку тарăна çитсе те нимĕн те туман. Çакнашкал çăмăл материал архитектура тата строительствă принципне ӳстерсе малала йарат. Епĕр халиччен тĕнче курман çăмăл та илемлĕ çуртсем тума пултарна пулаттăмăр".

Тумтире çĕнĕ материалăн химилĕ тата механически меслечĕсем пулăшнипе целлулозăран тума май пулнă. „Çип арламасăр, пир тĕртмесĕр, çĕлемесĕр çав материалран тумтир тума пулат" тесе калат автăр.

Çитĕс темиçе çулсенче халĕ епĕр усă куракан супăнпе йалтах усă курма пăрахма пулат. Хальхи супăнь вырăнне пит-куç тата кĕпе çума химилĕ ытти пĕрлешӳсем тума пулат. Супăнь çеç те мар. Кăмракран, чĕрĕ нефтăран илнĕ материалсене ĕçе кĕртсен, супăнь тăвакан, маргарин, тăвакан промышленноçсене пĕтĕмпех урахлатса çĕнетме пулат.

Анчах çак тата çавнашкал изобретенисем производствăн хальхи майĕсене тĕпрен çĕмĕрме хушаççĕ.

Капиталисăмла тĕнче производствăн хальхи майне çĕмĕресшĕн мар. Пысăк фирмăсем пысăк изобретенисем çинчен нимĕн те шарламаççĕ, йе вĕсене пĕтереççĕ.

Профессăр çакăн пек вывад тăват: „кучухнехи економикăлă тата политикăлă аталанун çулĕ физикăла наукăна вăл хăй тума пултарнисене тума май памаст йе вăл наукăпа тĕнчене çĕмĕрес ĕçре усă кӳрни чаранас шанчăка та памаст".

„Наукă ĕтемлĕхе пулăшас тет пулсан, унăн çĕнĕ хуçа тупмала" тесе пĕтерет хăйĕн статьине автăр.

Çĕрĕçĕнче те наукă кайала чакат. Кун çинчен сар Даниел Холл çырат.

— Ĕлĕк каланă, — çырат автăр, — пĕр пучах вырăнне икĕ пучах ӳстернĕ çынна общĕствăри чи ырă çын, тесе шутланă. Халĕ агрокультурăпа ĕçлекен çын хăйне общĕствă умĕнче айăплă çын тесе шутлат. Икĕ ăру вăхăтĕнче çĕртен тырă ытларах илмели май тума унтан ыйтнă. Халĕ ĕнтĕ, — тесе калат Даниел Холл, — Америкăри агрокультурă професăрĕ ман пата çапла çырат: „Йулашки планра 100 кĕренкерен кайа туртакан пилĕк мĕлйун сыснана тата 200 пин сысна амине вĕлерме пăхнă. Çак вăл нацине чечеклентерет пулсан епĕ вара хăман пурнаçа ахалех сайа йатăм".

Америкă професăрĕн çак сăмахĕсенче кучухнехи капиталисăм общĕствинче наукă мĕнле чăтлăха кĕрсе кайнине йар уççăн кăтартса панă. Кучухнехи капиталисăмла строй хăй умне темиçе ăру тунине çĕмĕрес ĕçе лартат. Халăхăн чи пысăк пайĕ выçă, çĕтĕк çатăк пурăннă вăхăтра, апат-çимĕç хакне чакарас мар тесе, капиталисăмла фирмăсем пысăк услам илме пултарчăр тесе, тĕмĕн чухлĕ тырă, кофе, ăш-какай пĕтереççĕ. Паллах капиталиссемшĕн продуктăсен хакне йӳнетниччен темиçе мĕлйун пăт тырпула шыва путарни, çунтарни усăллăрах.

Даниел Холл капиталисăмла общĕствă производствăна ӳстерме мар, ăна чакарма ыйтнине кăтартакан фактсене нумай илсе кăтартнă. Бразилинче кофене çунтараççĕ, Ирландире пăрусене вĕлереççĕ.

Продуктăсене нимĕн йĕркесĕр пĕтернине хирĕç тăрăхса протеслесе, Дениел Холл çĕрĕç ыйтăвне „вырăс планĕ" тăрăх татса пама, урăхла каласан, йалхуçалăхне коллективизацилеме хушат.

Биологи, медицинă, бактериологи пек наукăсен те кучухнехи капиталисăм общĕствинче малала аталанса пыма нимĕнле шанчăк та çук. Çакăн çинчен хăйсен статйисенче доктăр Енид Чарлз, професăр В. Х. Моттрам, доктăр П. А. Горер каласа параççĕ. Вĕсем капиталисăмла общĕствă наукăна етемлĕх ырлăхĕшĕн усă курма памаст, наукăна ӳсме, аталанма, унпа етемлĕхшĕн усă курма чарат, тесе çыраççĕ.

Вăрçа хатĕрленессинче, çынна вĕлерсе пĕтермели çĕнĕ хĕçпăшал шухăшласа каларассинче çеç — наукă шухăшĕ чăрмавсăр ӳссе пырат.

Çак лару-тăруран Англи учонăйĕсем мĕнле майпа çăлăнма шутлаççĕ?

Автăрсем чăнлăха маркçизла ăнланмаççĕ пулин те, вĕсен вывăчĕ интереслă. Çак ыйтура П. М. Блеккет професăр усă шухăш каласа пăрат.

„Общĕствă наукăпа усă курма пултараймаст пулсан, унăн наукăна хирĕç пулмала. Ку вăл халĕ капиталисăм шыракан çул, ку çул фашисăм патне илсе пырат. Тепĕр çулĕ социалисăмла планировани çулĕ, çак çул производствăна мĕн май çитнĕ таран сарма май парат, ăна ӳсме чармаст. Епĕ çак икĕ çул çеç пуррине ĕненетĕп... Епĕ пĕртен-пĕр çул вăл — социалисăм çулĕ, тесе шутлатăп. Социалисăма пур наукă та кирлĕ, вăл пуйанлăха нумай тума пултарат. Учонăйсемшĕн вĕсем кам йенче пулассине татса пама вăхăт нумай йулмарĕ пулмала".

„Чăваш Коммунĕ" хаçат корреспонденчĕсене

„Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцине ĕçйалкорсем хаçатра пичетленнĕ статйасемшĕн гонорор ыйтса çырусем нумай çыраççĕ. Анчах чылай автăрсен тĕплĕ адрĕсĕ çук пирки издательствă кантурĕ гонорар укçине куçарса параймаст. Çавăнпа пĕтĕм ĕçйалкорсене хăйсен йатне, ашшĕ йатне, хушаматне, йал, йалсовет, район йачĕсене тата пуштă уйрăмне тĕплĕн пĕлтерме ыйтатпăр.

Адрĕссене илсенех, гонорар укçине куçарса паратпăр. Малашне кашни çырурах адрĕса тĕплĕн çырса пĕлтерме ыйтатпăр.

Редакци.

Пулни-иртнисем

◆ Çак кунсенче Хĕрлĕ Чутай районĕнчи милици тытăмĕ Хусанущкăнь йалĕнчи С. Н. Иванова тытса арĕсленĕ. 1936 çулта халăх сучĕ Иванова 4 çула тĕрмене лартмала пригăвăр йышăннă пулнă. Тĕрмере ларас мар тесе, Иванов икĕ çул хушши тарса çӳренĕ.

Тӳрлетни

„Чăваш Коммунĕ" хаçатăн апрелĕн 15-мĕшĕнче тухнă 86(4899) мĕш номерĕнче „Акмали вăрлăх нормине шутласа кăларасси" çинчен пичетленĕ Çергейĕв агроном статйи пирки редакцине килнĕ Йа. Петров йулташ çырăвĕ тĕлĕшпе Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çапла пĕлтерет: вăрлăх нормине тӳрлетмели коефициента шутласа кăларнă чух Кӳкеç урпи тата „Красное Тойденское" текен вир тĕлĕшпе техникăла йăнăш пулнă. Кӳкеç урпи тĕлĕшпе коефициент 4,9 вырăнне 4,3 тухнă, вир тĕлĕшпе 4 пичетленнĕ, тĕрĕссипе 4,3. Çав май акмалли вир вăрлăхĕн норми те улшăнат: 20 килограм вырăнне 25,7 килограм пулмала.

Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссириачĕ.

ИЗВЕЩЕНИЕ

На заседание выездной Центральной партийной тройки комиссии партийного контроля при ЦК ВКП(б), имеющее быть 25 апреля 1938 г. в гор. Алатыре в здании райкома ВКП(б), для разбора апелляций вызываются следующие товарищи:

1. Савельев Парамон Савельевич. Б. Алгаши, Шумерлин. р-н, средняя школа.
2. Синельников Александр Михайлович. Алатырь, Жуковского, 76.
3. Мухин Николай Алексеевич. С. Кладбищи, Кувакин. р-н.
4. Иванов Лев Николаевич. Алатырь, махорсовхоз.
5. Гарев Петр Петрович. Алатырь, ул. Ленина, 45.
6. Андронов Борис Федорович. Алатырь, ул. Московская, дом № 93.
7. Бочкарев Иван Иванович. Алатырь, Комиссариатская ул., д. № 67.
8. Аверкиев Борис Яковлевич. Алатырь, ул. III-го интернационала, д. № 42.
9. Федоритов Илья Власович. Алатырь, Комсомольская ул., дом № 60.
10. Зотов Петр Иванович. Алатырь, Старо-Базарная ул., дом № 14.
11. Чинаев Михаил Николаевич. Чебоксары, Чувашская ул., дом № 37.
12. Демин Тарас Дементьевич. Алатырь, Московская ул., дом № 42.
13. Ткачев Михаил Алексеевич. С. Полибино, Порецкого р-на.

ПАРТКОЛЛЕГИЯ.

ПАРТКОМСЕН ÇЕКРЕТАРĔСЕМПЕ ПАРТОРГСЕНЕ

Шупашкар хулинчи парти комитечĕсен çекретарĕсен тата парти организатăрĕсен хаçат-журнал саракан уполномоченнăйсене уйăрмала (уйăрман пулсан). Вĕсене апрелĕн 22-мĕшĕнче каçхине 7 сехетре, Çыхăну çурчĕн клубне инструктивлă канашлăва йамала.

ПСК(б)П хула комитечĕ.

Ответлă редактăр Н. М СЕМЕНАВ.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн 1938 çулхи февралĕн 15-мĕшĕнчи 170-мĕш № постановленийĕ тăрăх

пур учреждениссен, предприйатисен, организацисен тата тĕрлĕрен шкулсен хăйсен çĕчĕк калибĕрлă винтовкисене пĕр уйăх хушшинче регистрацилемеле. Шупашкар гисен — Чăваш АССР Рабочисемпе Хресченсен Милици тытăмĕнче, районрисен — Рабочисемпе Хресченен Милицин вырăнсенчи пайĕсенче.

Учреждениссен, предприйатисен, организацисен, шкулсен пуçлăхĕсем тата уйрăм çынсем пĕчĕк калибĕрлă винтовкăсене регистрацилесрен пăрăнса йулсан, РСФСР Угол. Кодексĕн 182 статйи тăрăх айăпланаççĕ.

Чăваш АССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн Рабочисемпе Хресченсен Милици тытăмĕ.

Аптек тытăмне аслă бухгалтĕр кирлĕ

АДРĔС: Шупашкар хули, Аптек урамĕ, 13, Аптек тытăмĕ.

Академи театрĕнче

Апрелĕн 21-мĕшĕнче

Чăвашла спектакль

П. Н. ОÇИПĂВ

„АЙДАР"

(5 пайлă, прологлă)

Аслă режиççор К. И. ИВАНОВ лартат.

Художник Йе. Н. САПОЖНИКАВ.

Спектакльре музыкăна Государствă филармонийĕ выльат.

Дирижор — . ЙЕГОРАВ.

Талон № 172.

Абонемент № 3 талон № 15.

Кассă кăнтăрла 3 сехетрен уçă.

Спектакль каçхине 8 сехет те 30 минутра пуçланат.

Главнефтесбыт

Чăваш республикĕнчи кантурне

Йуристконсульт, кадрсен пуçлăхĕ, администраципе хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ, машинисткă, експедитăр, хутсемпе çӳрекен, ответлă исполнителсем, аслă бухгалтĕр, бухгалтĕрсем, финансист, статистик, нефть ĕçĕпе инженер тата техник

КИРЛĔ

Условисем пирки 1—04 номĕрлĕ телефон тăрăх ыйтса пĕлме пулат.

Главнефтесбыт кантурĕ.

Чăвашвăрманпром тресчĕн Улатăрти автошкулĕ

Чăваш республикĕнчи пур предприйатисене тата колхозсене автохуçалăхсем валли шкул çак условисем тăрăх шофĕрсем вĕрентсе хатĕрлесси çинчен пĕлтерет:

1. Автохуçалăх хăйне валли Улатăрти автошкулта шофĕрсем вĕрентсе кăларма килĕшни çинчен шкула пĕлтерет.
2. Шофĕр пулма кандитатсем уйăрса, вĕсене курса вĕренме йарат.
3. Автохуçалăх çавăн пекех тата хăйне валли, хăй çынсем уйăрса йамасăрах, шкул хăй вĕренме илнисенчен шофĕрсем хатĕрлесе пама шкулпа догăвăр тума пултарат.
4. Курсра пилĕк уйăх хушши вĕренмеле.
5. Вĕрентме (курсра вĕренекене материаллă пулăшу парассисĕр пуçне) 1200 тенкĕ тăрат. Çак укçаран 50 проц. догăвăр тунă чухне тата 50 процентне заняти пуçланнă кунран пуçласа икĕ уйăх хушшинче тӳлесе татмала.
6. Курсра 18 çултан иртнисене, сывлăх йенчен йурăхлине, академи пĕлӳлĕхĕ йенчен тăватă çул вĕреннĕ чухлĕ пĕлекенсене йышăнаççĕ.
7. Курса командировкăпа йанисем пурте медицинă йенчен пăхтараççĕ, вырăс чĕлхипе тата арифметикăна тăватă çул вĕреннĕ чухлĕ испытани тытаççĕ.
8. Командировкăпа йанисен çак документсене кăтартмала.
   1. Паспăрт (ăна вĕренме пырсан памала).
   2. Ĕçленĕ çĕртен йе колхозран характеристикă.
   3. Командировкă панă удостоверени.
   4. 6 фото-картăчкă.
9. Пур организацисен те командировкă панă кандитатсене апрелĕн 23-мĕш тĕлне испытани тытма йамала.
11. Курса йама командировкă панисене çирĕплетсенех, автохуçалăхсем малтанхи хут ыйтсанах, автохуçалăхсемпе догăвăр тăваççĕ.

АДРĔС: Улатăр, автошкул (малтан 9—10-мĕш №-лĕ вăрман савăчĕсем пулнă вырăнта).

3—2.

Автошкул.

„Чăваш Коммунĕ" çыранса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченнăй Чувашглавлита № 205. Гор. Чебоксары, Типографи № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 301. П. 6. 85—94 ей. 1—1 н; д